Ч 89
Ч-45843

ЯКОВ УХСАЙ



# АЧА ЧУХНЕХИ ÇĂЛТĂРĂМ

Национальная библиотека ЧР
4-045849

ошиб — 3
дх — 2

ЧӐВАШ
КӖНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1973



К84.09(=Чув)
У-89

*Яков Ухсай*

# АЧА ЧУХНЕХИ ÇĂЛТĂРĂМ

*ТРИЛОГИ*

БИБЛИОТЕКА
Совета министров
Чуваш. АССР
Инв. №. 5489

С(Чув.)2
Ух. 89

Проверено 19 СЕН 2017

И-45849

Национальная библиотека
Чувашской

© Чувашское книжное издательство, 1973 г.

7—4—3
86—73М

# КУНÇУЛ ТУПИНЧЕН

Кашни çын пурнăçĕнчех халиччен мĕн тунине тишкерсе тухас, ăна çамрăк чухнехи куçпа мар, хальхи ăспуçпа виçсе хаклас тапхăр çитет. Писательсем вара хăйсем ку таранччен çырнине пухса пĕтĕмлетме, çырнисен пуххине хатĕрлеме тытăнаççĕ. Теприсем тата, ĕмĕр тăршшĕпех канăçсăр пулнисем, хăйсен ĕçĕсене тепĕр хут пăхса тухса тӳрлетме пикенеççĕ. Виççĕмĕшĕсем, пурăнса иртнĕ кунçул тӳпинчен пăхса, хăйсен тĕп кĕнекине çырма пуçлаççĕ.

Ухсай Яккăвĕ маларах асăннă писательсен юлашки ушкăнне кĕрет пулĕ. Ухсайăн халиччен мĕн çырнипе лăпланса ларас, пĕр вырăнта тапăртатса тăрас йăла çук вара, вăл яланах малалла, çитмен çĕрелле талпăнать. Юлашки çулсенче те вăл малтанхи пекех тухăçлă та ăнăçлă ĕçлерĕ, çĕнĕ произведенисем çырса кăларчĕ. Унăн «Ача чухнехи çăлтăрăм» кĕнеки Мускавра вырăсла пичетленсе тухрĕ, ăна вулакансем пысăк хак пачĕç. Çак кĕнекешĕн поэта РСФСР тата Чăваш АССР государство премийĕсене памалла турĕç. РСФСР писателĕсен Союзĕн правленийĕн 1972 çулхи июньте Хусанта пулса иртнĕ ларăвĕнче те Ухсайăн асăннă кĕнеки пирки тухса калакансем ăна мухтаса калаçрĕç. В. Дементьев критик çапла каларĕ: чăваш халăх поэчĕн Ухсайăн «Ача чухнехи çăлтăрăм» трилогийĕн пуçламăшех эстетикăри çĕнĕ пахалăхсемпе палăрса тăрать, терĕ. РСФСР писателĕсен Союзĕн секретерĕ С. Орлов та Ухсайăн эпикăллă произведенийĕсенчи революциллĕ традицисене палăртса хăварчĕ.

Ку кĕнеке виçĕ поэмăран тăрать: унта «Ача чухнехи çăлтăрăм», «Чапаевпа тĕл пулни», «Силпири асамат кĕперĕ» поэмăсем кĕнĕ.

Виçĕ поэми те ачалăхпа çыхăннă, çав нихçан асран кайми тапхăр картинисенчен пуçланаççĕ, поэт çуралнă тавралăхпа, унти çутçанталăк илемĕпе паллаштараççĕ. Эпир кунта каллех Ухсай çутçанталăк çинчен питĕ хитре çырма пултарнинчен тĕлĕнетпĕр, асамлă йĕркесене вуласа киленетпĕр. Малтанхи йĕркесенчех вулакан вĕсене чăн-чăн чăваш поэчĕ çырнине туйса илет, хăйĕн пĕтĕм чунĕпе чăваш çĕршывне, чăваш тĕнчине кĕрсе ӳкет. Силпи енчи илемлĕ тавралăх куç умне тухса тăрать, çурхи чечексен тутлă шăрши сарăлнăн, шăнкăр-шăнкăр çăлкуçсен сасси илтĕннĕн туйăнса каять.

Ухсай ăста çырса кăтартнă сăнсем яланлăха асра юлаççĕ: унăн săввисенче хĕвел пин урипе çап-çамрăк улăп пек утать, кĕлти-кĕлтипе çутă сапалать, вăл çивĕч хăйранă пуртă пекех çап-çутă; пĕлĕтсем ушкăн шурă сурăх евĕр курăнаççĕ, ват тухтăр иртнĕ пек хуллен-хуллен шăваççĕ; юханшыв такам улăхра пăрахса хăварнă хĕç пек çуталса выртать, çерем тĕве кĕççи пекех çемçе, çĕрле çаранта чĕртнĕ вучах капан пек ялкăшса çунать— кашни ӳкерчĕк хăйне евĕрлĕ.

Поэт пире çуллахи çанталăка çеç мар, хĕле те асра юлмалла ӳкерсе парать. Акă, тăман тапранса каять те ушкăн-ушкăн тилĕ чупнă пек туйăнать, хĕвелĕ кĕлпе çутатнă пилĕк пуслăх пăхăр укçа пек хĕп-хĕрлĕн курăнать, çил асар-писер йĕке пекех çаврăнма пуçлать. Лăпкă хĕл кунĕнче йăмра турачĕсем пас тытнăран пĕрене пекех пысăк. Пӳртри таракансем те пĕр йĕкĕр ывăç сарă ылтăн сапнă евĕр курăнса каяççĕ. Кунашкал танлаштарусем, метафорăсем эпир кĕнекере тăтăшах, кашни йĕркерех тĕл пулатпăр. Ку ĕнтĕ Ухсай кашни япаларан чăн-чăн поэзи хĕлхемĕ çиçтерме пултарни çинчен калать.

Кунти илемлĕ çутçанталăк ытамĕнче ача-пăча, яш-кĕрĕм ӳссе çитĕнет, вăй илет. Вĕсем çинчен, телейлĕ те асран кайми çав вăхăт çинчен Ухсай пĕтĕм чун-чĕрипе хавхаланса çырать, кашни вулакан чĕринче ырă туйăмсем вăратать, тепĕр чухне çав вăхăт хăвăрт иртсе кайнăшăн тунсăх та пусса илет.

Çунатлă та хаваслă ачалăх тапхăрне çавнашкал ĕнентерӳллĕ те хумханмалла çырса кăтартма чăннипех пысăк талант кирлĕ. Поэт питĕ тĕрĕс калать:

Епле ытарайми илемлĕ эс,
Ачалăх...
Паян та, халь те юлнă
Манăн асăнмалăх
Инçе выртма вучахĕн
Тĕтĕмин шăрши.

Самани çăмăлах пулман та, анчах мĕн пуласси-курасси пĕтĕмпех малта, шухăш-ĕмĕт çунатлă, хуйхи-суйхи те ача-пăчана питех лекмен-ха. Пирĕн чĕресене кĕрсе курасчĕ: унта мĕн чухлĕ ылтăн та мерчен! — тет поэт. Çĕр çинчи хуртсем те ахах пек ялкăшаççĕ, вĕсене ачасем кокарда вырăнне çĕлĕксем çине тирсе яраççĕ. Пуçра кĕсен, анчах вăйăра çĕнтерсе, «патшана» лараççĕ. Кăвайт çутинче çĕтĕк сăхман та патша тумĕ пек çиçсе çунать. Юмах-халап тĕнчине путсан, ачасем çăмахсăр шĕвĕ яшкапа та лăпланаççĕ, юмахсенчи паттăрсем евĕр хура тур утсемпе кастарса çӳреççĕ. Вĕсене çăтмах та кирлĕ мар — тĕнче илемлĕ, шухăшсем аслă, ĕмĕтсем çунатлă. Хаваслă та телейлĕ пулма, савăнса-выляса çӳреме ачана нумаях та кирлĕ мар-мĕн: ача чун-чĕрине ăнланни, лăпкă та мирлĕ пурнăçпа пурăнни çеç кирлĕ. Кĕл çинче пĕçернĕ çĕрулми, çăмах яшки, çăкăр чĕлли, кăшкар утипе ыхра-сухан, хĕлле тăхăнма кĕрĕкпе

çĕлĕк, кăштах теттесем, ашшĕ-амăшĕ юратни пулсан, чăваш ачи хăйне телейлĕ, çынран катăк мар тесе шутланă.

Анчах Ухсай ӳснĕ вăхăтра чăваш ачисен çавсем те çителĕклĕ пулман, вĕсем йывăр та пăтрашуллă саманара ӳссе çитĕннĕ. Йĕлме хуппи вĕретсе, пăртакçă çăнăх хушса пĕçернĕ çăкăр çинĕ, юман йĕкелĕ, çăка кăчки пуçтарнă. Граждан вăрçи çулĕсенче Чăваш çĕршывĕнче пурнăç юхăнса кайнă, выçлăх пуçланнă.

Çав вăхăт çинчен эпир «Силпири асамат кĕперĕ» поэмăра акă мĕн вуласа пĕлетпĕр: яла Рашит пушкăрт, ача ашшĕн çывăх тусĕ, тайкаланса пырса кĕрет те халсăрскер, çавăнтах тӳнсе каять. Унăн пĕтĕм çемйи выçлăхпа вилсе пĕтнĕ, хăйне те вилесрен аран-аран чĕртеççĕ. Чăваш ялĕсенче те вилнисене чикме çын юлман, вĕсене шаршанласа хураççĕ.

Чăваш ялĕ ун чухне тĕшмĕшрен хăтăлса çитеймен-ха, ку вара ахаль те çитмен пурнăçа татах йывăрлатать. Вилĕсене хăратма ялта сĕрен ирттереççĕ. Чăвашсен ĕлĕкхи туррисем — йĕрĕхĕ, хĕртсурчĕ, ийе карчăк, вĕсемсĕр пуçне юмăç-тухатмăшĕ — пурте хăйсем валли парне ыйтаççĕ. «Мемме ыйтать хăй выçă вăхăтра мĕнпур усал-тĕсел». Анчах пуринчен те хаяртараххи халĕ выçлăх, ăна нимĕнпе те улталама çук:

Пыра-киле
çентерчĕ пур турра
усал турри.
Вăл — выçă хырăм.

Хресчен кашни кунах уя тухса пăхать, ыраш пиçсе çитессе çав тери кĕтет. Пĕтĕм шанчăк çĕнĕ тырă çинче, анчах вăл пулса çитессе чылай кĕтмелле-ха.

Ял урлӑ час-часах ҫар иртет. Ял халӑхӗ, мӗн кирлине урапасем ҫине тиесе, вӑрманалла тухса тарать те нӳхрепсенче пытанса ларать. Ачасен вӑййисем те саманине кура улшӑннӑ: вӗсем ытларах вӑрҫӑлла-салтакла выляҫҫӗ, пуля-етре пуҫтараҫҫӗ, «хӗрлисемпе» «шуррисем» ҫине пайланса пӗр-пӗринпе ҫапӑҫаҫҫӗ. Пуканисем те вӗсен сӑр шинеллӗ, хӗҫпе пӑшалӗ те пур иккен. Чухӑнсен ачисем ҫӗлӗк ҫине хӗрлӗ ҫӑлтӑр ҫакаҫҫӗ, ашшӗ-амӑшӗ пекех Хӗрлӗ ҫара кӑмӑлласҫҫӗ.

Пӗтӗм ял икке пайланнӑ: пӗр енче пуянсем — вӗсем, выҫлӑхпа усӑ курса, тата ытларах пуясшӑн, ӗлӗкхине каялла тавӑрасшӑн. Хура халӑх вара Совет влаҫӗ, Ленин хӑй пулӑшасса шанать. Ача Ленин ҫинчен учительница каласа панине пӗр сӑмах сиктермесӗр итлет. Учительница Чӗмпӗрте И. Я. Яковлев шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ, унта вӑл Ленин ашшӗне те, унӑн пиччӗшӗпе хӑйне те курнӑ, вӗсем чӑваш шкулне тӑтӑшах пырса ҫӳренӗ.

Хыпар:

— Ку выҫлӑха ҫӗнтерекен
Этем пур,— терӗ,—
Халӑха хӗрхенекен
ялтан яла кӗрсе
ҫӳрет иккен
хӑй Ленин,
аслӑ Ленин,
пирӗн Ленин.

Учительница сӑмахӗсене итленӗ сакӑр ҫулхи ача шухӑшӗпе Мускава, Ленин патне вӗҫсе каять, унран пулӑшу ыйтма шутлать. Ленин чӑвашран килнӗ ачана Кремле илсе каять, хӑй патне кӗртсе тутлӑ чей ӗҫтерет, халӑх нуши ҫинчен ыйтса пӗлет:

— Аван-и, ыльăм,—
терĕ вал мана,
мана хул хушшинчен
тытса уттарчĕ...

Халăх Ленина шанни, Совет влаçĕ пулăшасса кĕтни часах чăнна тухать. Ялта обществăллă столовăй уçăççĕ, унта чи малтан ачасене пухса çитерĕççĕ, нумай çын вилĕмрен хăтăлса юлать.

Кунта Ухсай Чăваш çĕршывĕнче чăннипех пулса иртнĕ ĕçсене çырса кăтартнă. Чăвашра выçлăх алхаснă вăхăтра Мускав хули, Ленин хăй пысăк пулăшу панă, Совнарком ку тĕлĕшпе ятарласа постановлени йышăннă, Мускав çыннисем хăйсен паекĕнчен катса Чăваш облаçне апат-çимĕç тиесе янă.

Çав вăхăтра пуянсем мĕн хăтланаççĕ-ха? Вĕсем çĕрлесенче, алăкĕсене шăлт-шалт питĕрсе, ял çине шăрши тухасран шикленсе, какай нимĕреççĕ. Çавсемех чухăнсене кивçенле çăнăх панăшăн ытлашшипех каялла сăптăрса илеççĕ. Акă Чапаев çарне кайнă Палюк арăмне — Евьен аппана Çӳçмен Еккимĕпе унăн хӳрешкисем епле асаплантараççĕ:

— Э-эх! —
Вăрларăн çăнăх-и е çӳп?
— Ы-х!
Килмест-и санăн йĕрессӳ те? —
питрен те,
кăкăртан та кӳп, те кӳп!
пырса çапаççĕ
пур ухмах та сӳтĕк.

Евьен аппа ӳкет те,
çĕр çинчен
ăна йăтаççĕ,
танкăлт уттараççĕ.

— Каллех тунатăн-и? —
çăварĕнчен
лăч-лач параççĕ те
шăлсем катаççĕ.

Пуянсем Ĕвьен аппа кĕлетне хăйсем çăнăх пырса хураççĕ те вăл вăрă тесе сăмах сараççĕ, çапла майпа унăн упăшкишĕн — Палюкшăн тавăраççĕ. Хăй ялта чухне Палюк пичче пуянсене хытах хĕстернĕ пулнă, чухăнсемшĕн çирĕп тăнă. Граждан вăрçи пуçлансан, Чапаев çарне хутшăннă та çапăçура пуçне хунă.

Çапла, ача пĕчĕклех класс кĕрешĕвĕн историне кĕнекесем тăрăх кăна мар, хăй куçĕпе курса вĕренет, майĕпен чăнлăхпа тĕрĕслĕх кам енче иккенне ăнкарма пуçлать. Тепĕр поэт сăмахĕсемпе каласан, вăл шуррисене мĕн ачаранах курайми пулса ӳснĕ. Граждан вăрçи паттăрĕпе — Чапаевпа тĕл пулни ача асĕнче ĕмĕрлĕхе юлать, унăн çутă сăнарĕ уншăн яланлăха ырă тĕслĕх пулса тăрать.

Ухсай хăйĕн геройĕсене час-часах ыттисемпе, тепĕр чухне вĕсене пачах хирĕçле сăнарсемпе танлаштарса кăтартать, çапла контраст меслечĕпе усă курнăран вĕсен ырă пахалăхĕсем тата уççăнрах курăнаççĕ. Малтан ял витĕр каялла чакакан шуррисем иртеççĕ. Вĕсем хăйсене мĕнле тытаççĕха? Салтак эшкерĕ хăраса тарни ачана кулăшла курăнать:

Э-хе, кусем иккен!
Эпир паллатпăр.
Хаваслă
Тӳнкĕр-тӳнкĕр параппан
Кĕрлевĕнче
Вĕсем питех те паттăр
Ăсанчĕç
Пелепей енне кунтан.

Çиелтен пăхма çеç хитре, чĕри хăравçă иккен кусен. Вĕсене Антанта лайăх тумлантарнă, хĕçпăшал та нумай панă, ятарласа вĕреннĕ генералсемпе офицерсем те çук мар вĕсен, çапах та Чапаевран вĕсем тармаллипех тараççĕ.

Пустав шинель,
Карттус çинче кокарда.
Аллисенче
Шап-шурă перчетке.
Офицерсем.
Юпа çумне кăкар та
Тĕлле те лапчăт
Ун пек инкеке!

Çак каппайчăксем ялтан тухса кайсанах, хĕрлисем пырса кĕреççĕ. Вĕсем çийĕн кăвар çунатлă кайăк çӳле кармашнă евĕр хĕрлĕ хăмач вĕлкĕшет, ялав йĕс чĕлхеллĕ оркестр шавĕнче мăнаçлăн ярăнса иртет. Çар пуçĕнче кăйкăр кайăк евĕр командир юланутпа пырать, çурăмĕ хыçĕнче тир бурка çилпе вĕçсе çĕкленет.

Канма ларнă салтаксене чăваш ачисем тăрă çăл шывĕ тултарса параççĕ.

— Маттур! — тесе
Çак çын мана каларĕ
Кĕтмен çĕртен
Сасартăк чăвашла.

Чапай ачасене кухньăна илсе каять, вĕсене тăраничченн çитерме повара хушать. Ача тав тăвасшăн, анчах вырăсла пĕлмест. Вăл Чапай хушамат мĕне пĕлтернине ăнланма тăрăшать, хăй ăсĕпе çапла шутлать:

Апла иккен,
Чапран Чапаев тенĕ.
Чăнах та
Тĕрĕс ячĕ чăвашла.

Ухсай поэзийĕ халăхпа, унăн шухăш-кăмăлĕпе уйрăлми тачă çыхăннă, çакăнта унăн вăйĕ тата чăнлăхĕ. Вăл халăхшăн чунне пама хатĕр çынсене мухтать, мĕнпур çынна çак енчен пăхса хаклать. Халăхпа пĕрле пурăнакан, халăхран нихçан та уйрăлман çынсем уншăн чи илемлисем те маттуррисем пулаççĕ. Чапаев пек геройсем шăпах ĕнтĕ çавăн пек çынсем, Чапаев ырă та паттăр çын пулни ача пек таса чуна та паллă.

Революципе граждан вăрçин вутлă-çулăмлă çулĕсем тăрăх çĕнтерӳллĕн утса тухнă халăхсемшĕн, çав шутра чăвашсемшĕн те тинех анлă та çутă малашлăх уçăлать. Халĕ ĕнтĕ ашшĕ-амăшĕ тахçантанпа ĕмĕтленни, пĕтĕм тăван-хурăнташ шутлани пурнăçа кĕме пултарать: ачана вĕренмешкĕн çул уçă, вăл тăван халăхшăн усăллă, вĕреннĕ çын пулать.

Темĕнле йывăр самантра та ачана çутă ĕмĕт чĕнсе тăрать, совет саманинче çак вĕренес ĕмĕт чăн пуласса вăл çирĕп ĕненет. Ашшĕ те ăна вĕренме ярасси çинчен калать:

Ачам, ху пулăн
ăмăрт пек хитре,
вĕренӳре
инçе вĕçме çунатлă.
Килтен ăсанăн
эсĕ Чĕмпĕре,
унта та çӳрĕн
пĕкĕнми хăватлă.

Чăваш ачисен шăпи çĕнĕ саманара чăнах та телейлĕ пулать, вĕсем Совет влаçĕ панă тивлетпе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче çеç мар, Мускавра тата ытти хуласенче вĕренсе тухаççĕ. Вĕсенчен ученăйсем, инженерсем, искусствăпа литература çыннисем, ытти специалистсем ӳссе çитĕнеççĕ.

«Ача чухнехи ҫăлтăрăм» кĕнекене кĕнĕ произведенисем — автобиографиллĕ поэмăсем, вĕсенче поэтăн хăйĕн пурнăҫĕпе ҫыхăннă нумай вырăнсене тупма пулать. Поэт хăйне мĕн ачаран пăхса ӳстернĕ тăван Силпи тавралăхне, кунти ĕҫчен те ырă кăмăллă халăха, чăваш йăли-йĕркине мухтаса юрлать, вĕсене хăйĕн поэзийĕн сăпки вырăнне хурса хаклать. Хăйĕн таланчĕ ĕҫчен халăх хушшинче ӳссе ҫĕкленнине, ăна халăх шухăш-кăмăлĕ витĕрех ҫапнине, хăйĕн сăвви-юрри ĕҫри тарпа исленнине палăртса, поэт ҫапла ҫырать:

Юратрăм хамăн
Силпири тăва,
ăна чăваш юррин
Олимпĕ терĕм,
куҫҫуль тăварĕ
витнĕ хам сăвва
Силпин шур чуллă
ҫăлĕнче чӳхерĕм.

Чăваш сăвви-юрри акăш-макăш хитре керменсенче мар, ҫĕр ĕҫлекенсем хушшинче, вĕсен кулленхи ĕҫĕпе кĕрешĕвĕнче ҫурални ҫинчен каласа, поэт ҫакна та палăртса хăварать:

Хура мăянла
ҫăкăр йӳҫҫинче
ҫуралчĕ манăн та
туссен телейĕ.

Ҫак кĕнекене кĕнĕ поэмăсене эпир итоглă произведенисем тенĕччĕ, вĕсене Ухсай пултарулăхĕн хальхи тапхăрĕн ҫĕнĕ ҫитĕнĕвĕ тесе хакланăччĕ. Ку поэмăсенче Чăваш ҫĕршывĕпе унăн ҫыннисене чунпа ăнланса, чунпа юратса ҫырса кăтартнă. Поэт халăхпа ҫывăх пулнине палăртма тепĕр чухне критиксем ҫапла ҫыраҫҫĕ: ку е тепĕр про-

изведенире выранти наци сăн-сăпачĕ, хăйевĕрлĕхĕ вăйлă сисĕнет, теççĕ. Ухсай пирки вара çапла калани пачах та çителĕксĕр, унăн поэзийĕн тĕп паллисене уçса параймасть. Колорит тени вăл çиелте выртакан япала, çыннăн тулаш сăн-сăпатне, унăн тумĕпе кил-çуртне, апат-çимĕçне, хăшпĕр йăлисене çырса панипех çырлахать. Ухсай сăввисенче вара эпир колорит çеç мар куратпăр, унăн кашни йĕрки, кашни сăнарĕ чăн-чăн чăвашăн, физикăри пек каласан, кашни элементарлă пайĕ чăвашла, чăвашлăх тени кунта ăшчиккинче выртать, произведенин содержанийĕпе форминче те палăрать.

Асăннă поэмăсем Ухсай пултарулăхĕ юлашки çулсенче тата çӳллĕрех пусăма çĕкленни çинчен, вăл философиллĕ лирика енне сулăнни çинчен калаççĕ. Ассоциаци ăсталăхĕ, Ухсайăн халиччен те вăйлă пулнăскер, ку произведенисенче тата хытăрах сисĕнет. Хушăран пĕр-пĕр поэт нихăш енчен те пĕр йĕркене килмен япаласене те, сăмахран, лашапа чернил кĕленчине те, пĕрле çыхăнтарма пултарать. Кунта унашкал çыхăнусем çинчен сăмах пымасть. Чăн пурнăçра куçа курăнсах кайман çыхăнусене тĕпчесе тупасси, çутçанталăкпа обществăри пулăмсен объективлă сăлтавĕсене уçса парасси çинчен калас пулать.

Ухсай час-часах çутçанталăкпа çынна, çынпа чĕрчуна, çынпа халăха, çынпа обществăна пĕрлештерме тăрăшать. Паллă ĕнтĕ, иртнĕ вăхăтсенче эксплуататорла обществăсенче, çав çыхăнусем хавшанă е татăлнă пулнă, пуçпулса тăракан классем çынна обществăна хирĕç, çавăн пекех çутçанталăка та хирĕç тăратма пайтах тăрмашнă. Тĕслĕхрен, акă, христиансен тĕнĕ пĕлĕтпе çĕре яланах пĕр-пĕринпе хирĕçле япаласем тесе шутланă. Христиансен чиркĕвĕ вĕрентнĕ тăрăх, çĕр вăл тасамарлăхпа çылăх вырăнĕ, пĕлĕт çинче вара

таса сывлăш, унта пирĕштисем, çылăхсăр чунсем пурăнаççĕ. Ухсай вара пĕлĕтпе çĕре çывăхлатма, вĕсем хушшинче пĕрпеклĕхсем тупма тăрăшать. Ку вăл космос ĕмĕрĕнче кирлех пулмалла.

Кĕнекене тĕплĕн вуласа тухсан, унта хальхи тапхăрти Ухсай поэзийĕн ытти уйрăмлăхĕсене те курма пулать, вĕсем пирĕн идеологипе, пирĕн саманари чи гуманистла вĕрентӳпе уйрăлми çыхăннă. Çакă ĕнтĕ кĕнеке пахалăхне ӳстерет, питех те талантлă та оригиналлă сăвăçăн асамлă поэзийĕпе паллаштарать.

**Ип. ИВАНОВ**



Национальная библиотека
Чувашской Республики
Ч-45849

# ЧАПАЕВПА ТĔЛ ПУЛНИ

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. 5489

Эпир, вĕт-шак- ача-пăча,
Яшкалăх
Серте татса
Тулли хутаçсемпе
Килетпĕр Силпирен.
Уяр çанталăк
Янрать
Çĕршер тăри юррисемпе.

Тин тĕртнĕ улача пек
Кăн-кăваккăн
Пăхать тӳпе.
Тухман пĕр пĕлĕт те.
Кӳлленчĕксем типмен,
Анчах шаланкăн
Сасси макрашнăн
Илтĕнет çӳлте.

Мăнтарăн чунăн
Ĕнтĕхет çăварĕ.
Ăна шыв кирлĕ.
Шыв йĕри-тавра кĕрлет.
Выçса çитни
Пырша пăва пуçларĕ.
Пиреччĕ çăкăр!
Татăк чĕлĕ те çитет.

Хăçан астивнĕ-и?
Ан ыйт тархасшăн!
Çăмах юрсан,
Çăмах пире аван.
Ӳт-тир ырхан,
Анчах та ашкăнасшăн,
Çерем çинче
Чупас килет çарран.

Эпир çăпатасене
Салтса çакатпăр,—
Текех силленччĕр
Çурăм хыçĕнче!
Пĕрре пулин те
Савăнма вăй патăр
Яп-янкăр кăмăллă
Çурхи тĕнче!

Чупса ырсан,
Хашка-хашка сывлатпăр,
Канса ларатпăр
Пĕр самант хушши,
Чĕре сури —
Кăшкарути чăмлатпăр.
Пиртен перет
Ыхра-сухан шăрши.

Эпир
Хаяр саманара çуралнă
Шăй-шай та,
Кĕрлев те итлеме,
Ачаранах
Каçса кайсах юратнă,
Сехре хăпсан та,
Вутлă илеме.

Пыратăп эпĕ саккăрта.
Кĕтет телейĕм,
Анне каларăш,
Малашне мана.
Кĕпеллĕ, тет, çуралнă эп.
Кĕпе-йĕм
Паянлăха
Шăла пиртен кăна.

Эпир шавра вăййа
Вĕреннĕ меллĕ.
Теттемĕрсем
Йĕсрен те тăхланран.
Пуканесем те пирĕн
Сăр шинеллĕ,
Вĕсен хĕçпе пăшалĕ
Пур паян.

Хĕлле çĕре кисрентерсе
Кĕр те кĕр
Кĕрлерĕ çапăçу.
Хутаçсене
Çерем çине хурса
Унта пухса çӳретпĕр
Шрапнельсен
Тăхлан етрисене.

Эпир
Шăратнă тăхлана яратпăр
Кусна ăшне.
Вара пулать панук.
Екки ярса тĕллетпĕр те
Шаккатпăр —
Кусна вăййи пек
Хӳхĕм вăйă çук.

Хĕвел вĕри пăхать.
Тӳлек çанталăк.
Хытхурана
Çакланнă тĕк те хускалмасть.
Уяр чухне те
Аслати сасартăк
Кĕрлет-и таврара?
Апла пулмасть.

Алла çамка çине хурса
Пăхатпăр
Питех тинкеррĕн —
Курăнать пире
Ем-ешĕл тумтирпе
Тумланнă капăр
Вăрман та хир
Янкарлă тĕтрере.

Çурхи тĕсе пăсса
Саралнă вырăн
Лаппи
Унта та пур,
Кунта та пур.
Унта кăçал акман
Никам та тырă.
Чипер хирте те
Сисĕнет хĕн-хур.

Унта тута кĕпçи
Ӳсетчĕ пĕлтĕр,
Кăçал çĕрсе йăваннă
Хытхура.
Лаша вăрри пек
Çивчĕ шăлĕ витĕр
Шĕвик шăхрать
Тыркас унти уйра.

Ун пек анасене
Пăхас сухаçă
Çӳрет е вилнĕ
Вăрçă хирĕнче.
Çави те çурли
Тутăхса выртаççĕ
Шĕкĕ кăшланă
Каштасем çинче.

Лаши те кӗҫенмест,
Ӳссе ӗрченӗ
Шӑмми ҫинче
Хупах та вӗлтӗрен.
— Хуҫи ӑҫта? —
Сӳсменӗпе йӗвенӗ
Пӑта ҫинче
Кӗтеҫҫӗ кунсерен.

Вӗри куҫҫуль те юн
Ёмсе ҫӑралнӑ
Тӑпра ҫинче
Хаяр саманара
Эпир
Синкер те терт
Курма ҫуралнӑ,
Пӳрне ёмсе
Йӑпаннӑ выҫлӑхра.

Манран пӗр килӗ урлӑ
Пурӑнатчӗ
Хура пӳртре
Ман тантӑш Никканур.
Юмарт ачаччӗ,
Ҫӳҫӗ хуп-хураччӗ.
Аса илсен,
Калас сӑмахӑм пур.

Эпир унпа
Йӗкреш пекех татуччӗ,
Эпир пӗрне-пӗри
Алран алла
Тытса утаттӑмӑр.
Юлташлӑх вучӗ
Чӗнетчӗ хирелле,
Вӑрманалла.

Юратнă амăшĕ çукран
Апат шыранă.
Йĕлме хуппи те
Выçă чух апат.
Ăна вăл киллинче
Тÿсе тарланă.
Пăртакçă çăнăх хуш!
Çиме юрать.

Ман тусăм
Кÿпĕнсе тертленчĕ,
Варне тытса
Шăри-шари саспа
Йĕретчĕ вăл.
— Анне, вĕлер-ха! — тетчĕ,—
Анне, пуçран тиврет-ха
Пуртăпа.

Хам тусăм умĕнчен
Ун чух каймарăм,
Пĕлмерĕм эпĕ
Амăш пек йĕрме.
Хăрушă çухăрса
Ярса мăнтарăн
Лăпланчĕ.
Эп куртăм вилĕме.

Пĕрремĕш вилĕм,
Вилĕм куртăм эпĕ.
Юратнă тусăмсем тата
Вилнисене пăхма
Кайса çÿреп-и?
Каймастăп эп.
Сехре хăпать унта.
Килтен киле
Темле те чир çÿрерĕ,

Чылай сайратрĕ
Манăн ăрăва.
Лутра та пĕчĕк
Хĕрессем çĕклерĕ
Мăянлă сарлака
Арки çине çăва.

Вут-тар чиртен
Сыхлать, тесе калаççĕ.
Пистертĕр!
Патронсен гильзисенчен
Илсе тар хунă
Пĕчĕк пир хутаçĕ
Çакса çӳретпĕр
Кăкăр çумĕнче.

Çурхи тĕнче,
Пире хĕрхен, тархасшăн!
Эпир ырхан вăя
Пухатпăр ӳт-тирте,
Çакатпăр
Вилĕме тытса чарасшăн
Мăя
Таса пилеш пĕтевĕ те.

Пелепейпе Ĕпхӳ хушши.
Çак хушă
Тĕвви çинче
Ларать те пирĕн ял,
Пăшал та тупă
Сассине хăрушă
Илтсе тӳсме
Малтан çитмерĕ хал.

Урапасем çине
Уйран чĕресĕ,

Ҫӳпҫе те,
Кашăк-тирĕк те хуран
Тиетчĕҫ аслисем.
Телей кĕтесĕ,
Тĕнче хӳтти пул, эс вăрман!

Кĕр те кĕр аслатиллĕ
Сивĕ ҫумăр
Хăратрĕ
Кĕрленай вăрманĕнче.
Аҫа ҫапсан та,
Шанмĕ пирĕн шăнăр.
Эпир ҫуралнă
Тертлĕ ҫулсенче.

Эпир йĕпе чухне
Шăнса чĕтрӳҫĕн
Пăхаттăмăр
Пăтранчăк тӳпене.
Аяллан ярăнатчĕ
Ванчăк ҫиҫĕм
Ĕнтсе ярас пек
Пирĕн ҫӳҫсене.

Ачаш ачаччĕ,
Эпĕ ҫиччĕречче.
Нумай пулмасть-ха,
Кайрăм саккăра.
Ҫĕре чиртен тасатнă пек
Ҫиҫетчĕ
Вут-ҫиҫĕм,
Ҫиҫĕм юлчĕ куҫăмра.

Кĕрлерĕ ҫапăҫу
Пĕрре кăна-и?
Пыра-киле

Нӳхрепсенче ларма
Хуллен вӗрентӗмӗр.
Етре шӑй-шайӗ,
Вут-тар шӑрши
Хуплатчӗ урама.

Хӗп-хӗрлӗ хӑмачран
Ҫӗленӗ ҫӑлтӑр
Ахаль тетте пек
Туйӑнман пире.
Инкек-синкексенчен
Пире вӑл ҫӑлтӑр,
Сӑвап та ырлӑх
Патӑр тӗнчере!

Ӑна
Сӑхман ҫанни ҫине ҫӗленӗ,
Мулкачӑ ҫӗлӗкӗ
Ҫамки ҫине
Ӑна лартса
Эпир ялта ҫӳренӗ,
Мухтанӑ
Хамӑр ҫарӑн ялавне.

Сасартӑк
Шуррисен салтак-ҫӗленӗ
Килсе тухсан,
Эпир, ача-пӑча,
Ҫурса тӑкман,
Чӑнтан-вартан ӗненнӗ
Кӗрхи пилеш пек
Хӗрлӗ хӑмача.

Ӑна пытарнӑ,
Йӗрӗх тарнӑ хыççӑн
Каллех те

Çанăпа çĕлĕк çинĕ
Ăна çакса
Салтак пекех утуçăн
Çĕкленĕ каррăн
Хамăр пуçсене.

Ӗпир çӳл ту çинче пăхса
Тăратпăр,
Хавасланса йтлетпĕр
Пĕр кĕвве
Кĕрсе инçе Пелепейре
Пĕр тапхăр
Хускалнă
Аслатиллĕ кĕрлеве.

Эпир кунта
Хăватлă çапăçу та
Тăхланлă çумăр
Килессе кĕтме
Утатпăр ялалла.
Кун янкăр çутă.
Тусан хуплать-и
Çакă илеме?

Пире хăрушă мар.
Пире пурте пĕр.
Пире çуратнă
Çапăçу курма.
Эпир серте шăрши илсе
Кĕретпĕр
Мăян яшки
Шăршиллĕ урама.

Яланхилле иртет
Çурхи кĕске çĕр.
Шăри-шари автан

Сассисемпе
Килмест ирхи тĕнче.
Автан сассисĕр
Ял тăлăх юлнă
Выçă пулнипе.

Кăвак чаршав карса
Ирхи çанталăк
Хуллен киле пуçларĕ.
Тӳпере
Мăч-мăч сӳнеççĕ çăлтăрсем.
Сасартăк
Ура çине
Тăратрĕ шав пире.

Тĕтре ураписем
Шăваççĕ
Çырма енчен,
Хуплаççĕ таврана.
Пӳртсен те,
Йăмрасен те курăнаççĕ
Ишсе каяс пек
Тăррисем кăна.

Йалттам юланутсем те
Тĕпĕр-тепĕр,
Урапасем иртсе пыни те
Урамра,
Çынсен сасси те
Шурă сывлăш витĕр
Пĕр харăс илтĕнет
Хускалура.

Пурне те тинкерсе
Пăхасшăн эпĕ
Хăпартăм

Пахчари йăмра çине,
Пăхса тăратăп
Шучĕ те хисеплĕ
Пулми
Салтак эшкерĕ тарнине.

Э-хе, кусем иккен!
Эпир паллатпăр.
Хаваслă
Тӳнкĕр-тӳнкĕр параппан
Кĕрлевĕнче
Вĕсем питех те паттăр
Асанчĕç
Пелепей енне кунтан.

Пустав шинель.
Карттус çинче кокарда.
Аллисенче
Шап-шурă перчетке.
Офицерсем.
Юпа çумне кăкар та
Тĕлле те лапчăт
Ун пек инкеке!

Пурин кĕсйисенче сехет,
Пурин те
Пирус йĕнни çинчи
Ӳкерчĕкре
Король майри.
Мĕскер шутлать-ши ĕнтĕ
Королĕ
Инçе çап-çутă керменре!

Атте-анне курман чухне
Пӳртре мăк
Çăлса туртатăп эп,

Анчах та ман,
Турат ҫинче сасартăк
Кулас килет
Каппайчăк тăшманран.

Тĕтре хуллен саланчĕ.
Ҫул тусанĕ
Ӳкет
Ҫеҫкеллĕ ҫĕмĕртсем ҫине.
Пулмарĕ ҫапăҫу.
Тавралăх канĕ,
Сывламĕ
Йӳҫĕ тĕтĕм шăршине.

Таса ыраш капанĕ пек
Сап-сарă
Хĕвел ҫуттисене
Кĕлте-кĕлте
Пăрахрĕ те
Вĕри хĕрте пуҫларĕ
Ҫынна
Ҫурта, хирте те пур ҫĕрте.

Хальччен
Никам куҫне те курăнмасăр
Ҫухалнă кĕленче татки
Йăл-ял
Ялтрарĕ халь.
Пăхма кичемччĕ паҫăр,
Ĕҫе тухма
Вăй-хал пуҫтарчĕ ял.

Хĕрсем
Ҫăла тăр шыв ăсма каяççĕ
Пĕр ушкăн,
Шăлтăр-шăлтăр витрепе.

Кĕвентисен,
Хăйсен çĕршер хăлаçăн
Щăваççĕ
Вăрăм мĕлкисем ирпе.

Юпа çинче
Кĕввисене тăсатчĕ
Тарай тутри пек,
Тĕклĕ шăнкăрчи,
Хĕвел çинче
Çунатчĕ ун çуначĕ.
Тăхта-ха, савнă кайăк,
Чим-ха, чим!

Эпир кĕтме юратнă
Вăхăт мар-ши?
Çырансене те тӳпене,
Хире
Тулса килет
Шинеллĕ халăх маршĕ
Ик çухрăм
Глуховская станцирен.

Ун пек юрра
Эпир унччен итленĕ.
Юрлаççĕ хĕрлисем.
Улачаран.
Анне мункун чухне çĕленĕ
Кĕпе-йĕме
Илетĕп арчаран.

Кĕпе çине тиретĕп
Хĕрлĕ çăлтăр,
Ем-ешĕл курăк
Шăтнă урама
Тухса

Пӳ-сийӗм ӳснӗ паттӑр
Этем пекех
Тытатӑп эп хама.

Пӗр харӑс тухнӑ тусӑмсем
Сахал-и?
Вӗсен те
Хӗрлӗ ҫӑлтӑр умӗнче.
Аллисене те
Пысӑк ҫын пек халӗ
Тытса тӑраҫҫӗ
Ҫурӑм хыҫӗнче.

Ваттисенчен малтан
Курасшӑн кӑмӑл
Чӗнет пире.
Чӑнах та курмалла!
Эпир кӗтсе илесшӗн
Хӑпӑл-хапӑл
Чупатпӑр васкаса
Тукасалла.

Кунта уҫланкӑри пек
Сывлӑш уҫӑ.
Лере тусан,
Тусан,
Тусан
Нумай ҫуран салтак та
Юланутҫӑ
Уяр кунта
Уя таптанӑран.

Юмахсенчи
Кӑвар ҫунатлӑ кайӑк
Ҫӳле кармашнӑ пек
Хӑмач ялав

Вĕл те вĕл вĕлкĕшсе
Хăпарнă майăн
Кĕрет
Ялан ăна манми яла.

Сунтал çинче шакканă,
Хĕрнĕ хурçă
Хĕмленнĕ пек
Ялавĕ айĕнче
Пыраççĕ
Виçĕ çамрăк юланутçă
Йĕс чĕлĕхлĕ
Оркестр шавĕнче.

Кĕвве кĕрсе
Утать пĕр харăс халăх
Асар-писер нумай та
Акрамат,
Пырать
Шуррисене тĕппи тумалăх,
Çĕре ирсе чикмелĕх
Вăй-хăват.

Çыхса пĕрункă тунă
Сăр шинелĕ
Кашни салтакăн
Хулпуççи çинче.
Тӳме çинче
Вылять çу кун хĕвелĕ,
Сикет
Штыкпа затвор çинче çиçсе.

Пурте пĕр ушкăн
«По морям!» юрлаççĕ,
Тата хушса калаççĕ
«По волнам!»

— Нам-нам! — тесе
Вара вăрах янраççĕ
Сăртри вăрман,
Çыран та,
Вар,
Урам.

Чечен çеремлĕ вырăнта
Хулленçĕ
Юртса килет
Çинçе те шурă ут.
— Урра!
— Урра!
— Урра!
Тесе каласçĕ
Çынсем пĕрре,
Тепре те виçĕ хут.

Лаша çинчи
Сар мăйăхлă этемĕн
Сике-сике
Йĕнер пусси çинче
Шеп кăйкăр кайăк евĕр
Пынăçемĕн
Вĕçет тир бурка
Çурăм хыçĕнче.

Унччен çеç йӳлĕ пынă
Чĕлпĕре вăл
Кару туртсан,
Лаши чĕвен тăрать,
Пĕрре йăтса та
Антарса çăп-çăмăл
Ура ылмаштарать,
Тăха чăмлать.

Лаша ҫинчи этем
Парать команда.
Чупса тухаҫҫӗ
Салтаксем канма
Ҫерем ҫине.
Чӗнмест сăртри вăрман та
Ҫыран.
Шывне калаҫтарать ҫырма.

Ҫынсем канман-тăр
Темиҫе те талăк,
Урисене тăсса
Выртаҫҫӗ ярт.
Салтаксене ачаш пăхса,
Ҫанталăк,
Вӗриленсе
Усаллăн ан уярт!

Вӗсем ӗҫес килсе
Тахҫан сусанă,
Тип-типӗ пыр,
Чӗлхе, ҫăвар маччи.
Ана сиссе илсе,
Туйса сăнанă
Эпир —
Вӗт-шакăр ял ачи-пăчи.

Калай витре,
Ҫăка ленккес илетпӗр,
Кӗпесене
Ҫилпе шалпарлатса
Чупатпăр ҫырмана —
Эппин, юхса кӗр,
Ту шывӗ,
Шăнкăр-шăнкăр та таса.

Çăл шывĕ валакран ÿксе
Пиншеррĕн
Саланнă
Йăлтăркка пĕрчисенчен
Пулса çĕкленнĕ
Асамат кĕперĕ
Шап-шур çеçкеллĕ
Çĕмĕртсем çинче.

Сипетлĕ шутланать
Кунти çăлкуçĕ,
Кунти шыва
Сыпса кăвак ире
Мухтан саркайăксен
Сассийĕ уçă,
Кунти шыва ĕçен
Хĕрсем хитре.

Вут чулĕ хушшинчен
Тухса шарланă
Тăрна куç пек
Тăп-тăрă сивĕ шыв
Асса килетпĕр.
Эс, салтак тăванăм,
Пичче, тутан,
Пире те
Ырлăх хыв!

Эпир хаяр саманара
Çуралнă,
Пире ачашлакан
Никам пулман,
Нумайăшне
Аттемĕрсем хăварнă,
Киле килмен-ха
Халь те вăрçăран.

Ту шывĕ
Чăннипех те тутлă ахăр.
Епле савса ĕçеççĕ —
Куртăр-и!
Салтак-туссем
Пире параççĕ сахăр,
Параççĕ
Кăмăрт-кăмăрт сухари.

Ыттисенчен
Хăюллă пулнă эпĕ,
Пăртта тавраш ĕ,
Хуп-хура ача
Хам кăкăра
Ахаль çакса çӳреп-и
Хĕвел пек хĕрлĕ
Хăмача?

Сар мăйăхлă этем патне
Пыратăп
Именерех
Тулли чĕресĕмпе.
Сăнне ӳкернĕ шыв çине
Шăп та шăп
Умри йăмра,
Хĕвел,
Кăвак тӳпе.

Атте-анне:
Ялан мăн çын сăнарĕ
Вĕрсе хăпартнă пек тулли,
Кӳпшек,—
Пулать тени
Кунта тӳрре тухмарĕ.
Ахаль этем,
Кунта çуралнă пек.



Ӳт-тирӗ аттенни пек
Типшӗм унӑн,
Ялти Митрюк Еккимӗ
Евӗр-ҫке
Ӳстернӗ мӑйӑхне,
Вӗҫне вӑл тунӑ
Кӑтралатса
Ик ункӑ пӗтӗркке.

Кӗрекери хуҫа пек
Эпӗ алтӑр
Тулли пӗрре,
Тата тепре ӗҫме
Ӑсса паратӑп
Сарӑ ҫӳҫлӗ паттӑр,
Ачаш та ҫырӑ куҫлӑ
Этеме.

— Маттур! тесе
Ҫак ҫын мана каларӗ
Кӗтмен ҫӗртен
Сасартӑк чӑвашла.
Халь курнӑ пек
Тухса тӑрать сӑнарӗ
Паян ума,
Ҫухалмӗ малалла.

Ҫак ҫын мана
Хултан тытса уттарчӗ
Кукка пекех
Тӑванӑн юнашар.
Аллин хӗрӳ ӑшши
Кӗртсе хӑварчӗ
Ӳте хӑват,
Куҫа—тулли кӑвар.



Хама сасартăк
Эпĕ туйрăм каччăн,
Чĕнленчĕ
Манăн шăнăрта тĕрек.
Урисенче
Йĕнер качи янратчĕ
Чулсем çине
Çут кĕмĕл сапнă пек.

Эпир пыратпăр
Икĕ кустăрмаллă
Асар-писер
Пĕр мăн хуран умне.
Унта какай шăрши
Питех те паллă,
Кăларнă пăтă
Техĕм шăршине.

Мана ертўçĕ çыннăм
Тем каларĕ
Чăлт-шурă тумлă
Çамрăк этеме.
Эп саккăр тултарман.
Мехел пулмарĕ
Пĕрех пуплев те
Вырăсла пĕлме.

Салтак
Какайлă тутлă пăтă ячĕ
Çăка чĕресĕме
Пĕр çăпала,
Тата пĕр пысăк чĕлĕ
Çăкăр пачĕ.
Мĕскер калас?
Пĕлместĕп вырăсла.

Ытти ачасене
Кунта чĕнтерчĕ
Çак ырă çын,
Вара брезент сарсах
Çерем çинче
Хăна туса çитерчĕ
Пурне те
Шурă шупăрлă салтак.

Эпир
Куллен чăмлана хир суханĕ,
Серте яшки
Лĕрккенĕ килсенче,
Ура явса
Тату ларатпăр халĕ.
Чипер салтак пиччен
Кĕрекинче.

Пиртен чылай çеç
Çӳллĕ кустăрмаллă
Хура чугун
Хуранĕ умĕнче
Салтак хаваслă пĕлтерет
Мухтавлă
Чапай пире
Хăна туни çинчен.

Апла иккен,
Чапран Чапаев тенĕ.
Чăнах та
Тĕрĕс ячĕ чăвашла.
Унччен çак ят
Кĕрсе тухса çӳренĕ
Кунта килтен киле,
Ялтан яла.

Умра утса пырать
Салтак вăрманĕ,
Юрри кĕрлет
Кăвак тӳпе таран.
Çăраланса
Хăпарчĕ çул тусанĕ
Çĕршер ура
Пĕр харăс утнăран.

— Чапай пырать! —
Тесе каланă майăн
Пăхатăп эпĕ
Шурă ут çине.
Салтак,
Салтак,
Салтак
Утать нумайййăн
Шуратăлпа
Ĕпхӳ хули енне.

Кирле те куртăр!
Килĕме пыратăп,
Пурне те халĕ
Лайăх кăтартма,
Асра тытса тăма
Йăтса тухатăп
Чунтан юратнă
Чирлĕ шăллăма.

— Чапай пăтти
Сана сипетлĕ пулĕ,—
Тесе ăсса
Паратăп кашăкпа.
Кунтан инçе
Анаткассин те çулĕ
Хупланнă ĕнтĕ
Йăсăр тусанпа.

— Чапай хăварчĕ
Сахăрне пĕр татăк.
Ку сан валли!—
Калатăп шăллăма.
Пĕлместĕп эпĕ мĕншĕнне,
Сасартăк
Куççуль тухать.
Шăлатăп куçăма.

Çурхи ем-ешĕл кун
Асран каймарĕ,
Сăпне хăварчĕ
Куçăм шăрçинче.
Ун чух хĕвел çутти
Сиксе вылярĕ
Тӳме çинче,
Штыкпа затвор çинче.

Унтанпала
Нумай кунсен хисепĕ
Ĕçре те,
Канура та вăрçăра,
Каллех ĕçре
Иртсе кайсан та,
Эпĕ
Пурне те тытрăм
Хамăн асăмра.

Каятăп
Пелепей хули енне-и,
Пулатăп-и Чăваш çĕршывĕнче,
Будайка ялĕнче —
Мана телейĕм
Ялан астутарать
Çав кун çинчен.

*1955*



# АЧА ЧУХНЕХИ ÇӐЛТӐРӐМ

I

Тĕвен çемçе çăмне
Пĕр ыра пушкăрт панă
Ман аттене
Пĕрре
Тим шывĕ хĕрринче.
Анне кĕççе пустарнă,
Ун çинче çуратнă
Мана
Кĕрхи сип-сивĕ
Çур çĕр тĕлĕнче.

Таракансем мачча çинче
Çиççе ялтранă
Пĕр йĕкĕр ывăç
Сарă ылтăн сапнă пек.
— Нумай укçаллă пул!—
Эпи инке ташланă,
Юрланă ватăскер
Чылай çеç сыпнипе.

Атте Силпи вăрманĕнче
Касса ӳкернĕ
Хупне сӳме анчах
Хура хурамана.
Унтан сăпка çĕленĕ вăл.
Анне сиктернĕ
Ачашшăн
Манăн лăнкăр-лăнкăр сăпкана.

Чирленĕ эпĕ,
Путек сассисене итленĕ,
Анранă армути
Хаяр шывне ĕçсе.
Аттеçĕм хунă пуç айне

Лаша йĕвенĕ,
Телей ыйтса кĕлтунă
Пӳлĕхçе.

— Пулинччĕ, манăн пепĕккем
Ĕçчен сухаçă! —
Тесе пуççапнă вăл.
Турă умĕнче,
Ăна чĕре сури тума пăртакçă
Какай пама
Така пусман вăл хальхинче.

Аттеçĕм манăн пулнă
Чеерех хайлаллă,
Ача ятне
Хура така пулман пирки
Вăл каснă пушăтран
Чăнах та мăйракаллă,
Тăват ураллă
Ырă выльăх кĕлетки.

— Сыхла ача чунне,
Сăвап кӳр эсĕ, турă! —
Тесе атте пăрахнă
Пушăт татăкне,
Юсман икерчĕ те
Çăра кĕвелнĕ турăх
Тăкса хăварнă
Таса чӳк тăпри çине.

Мăкла пăру
Шатра чĕлхипеле çуланă
Вĕри чирте тарланă
Манăн çамкама,
Чӳречерен кĕркелеймен
Хĕвел вылянă,

Çутатнă
Чăкăт курăк шăтнă урама.

Мана
Йӳçенкĕ тĕтĕм антăхтарнă,
Çие тăпра юхтарнă
Хăрăмлă маччa.
Лăстанкă кивĕ кипкере
Ӳссе хăпарнă
Чăваш турачĕ эп,
Вилме пĕлмен ача.

Ӳссех пыратăп эп,
Хамах тытатăп кашăк,
Çичче çити
Чухлатăп ĕнтĕ шутлама,
Чипер пĕлетĕп
Хамăр çырмари пăтранчăк
Шывра чул айĕнчен
Кутан пулла тытма.

Хăш чух эпир
Юлташсемпе пĕрле кĕретпĕр
Йăмра мĕлки йăваннă
Тарăн авăра,
Пулла кĕпе-йĕмпе
Сĕре-сĕре çӳретпĕр,
Чăматпăр та выртатпăр
Куç уçса шывра.

Ултта çитсен
Аяккалла юлса иртеççĕ
Сиксе чупни те,
Кĕвенте те утланни.
Ачашлăх çук.
Пулатăп эп хирти сӳреçĕ,

Атте тĕрекĕ,
Шанчăкĕ,
Ĕçчен çынни.

— Атя, çÿрен лаша,
Чĕлхе пĕлмен чиперĕм,—
Тесе тытма хăтлантăм
Эпĕ мăйĕнчен.
Анчах, чĕрне вĕçне тăрсан та,
Çитеймерĕм,
Сиксен те, çук,
Утланаймарăм хальхинче.

Атте мана ачаш çĕклерĕ те,
Утлантăм,
Нихçанхинчен
Телейлĕ туйрăм эп хама,
Сăран йĕнерĕм вырăнне
Тирпейлĕ сартăм
Анне çĕленĕ
Шăлапир сăхманăма.

Сÿре хура çĕре чĕрсе
Силленĕ майăн
Мана патша пекех
Ларса пыма хитре.
Лаша çинчен
Çырса ÿкернĕ евĕр лайăх
Куратăп эпĕ
Вăрмана та уй-хире.

Хĕрлĕ ăман,
Шап-шур хуртпа кăпшанкă
Пухса ана çинче
Хура курак вĕçет.
Йĕме юратакан

Шĕлинк-шĕлинк шаланкăн
Мĕлки пите те чĕлпĕре
Лексе иртет.

Тарланă ут çинче
Шăна-пăван нумаййăн.
Сирме мана
Атте тыттарнă пĕр турат.
Анчах ялан епле-ха
Ĕлкĕрсе пырайăп,—
Нăй-нăй тăвать,
Тĕтре пек явăнса тăрать.

Пĕр çилсĕр антăхать
Йĕри-тавра çанталăк,
Хĕвел унки хăйранă пуртă пек
Çап-çут.
Капланнă шухăша сирсе ярса
Сасартăк
Вĕçсе килет
Шуйттан илесшĕ кукăркут.

Лаша тапса сикет.
Айри сăхман йĕнерĕм
Хăпартланса,
Вĕçет кăркка аçи пекех.
Хама тытма пĕлмерĕм эп,
Ĕлкĕреймерĕм,
Йăвантăм та,
Амантрăм пилĕке.

Сӳре ӳпне килсе
Мана пĕрре тыттарчĕ,
Пĕрре çапса
Ислетрĕ хул калакĕнчен.
Пуçа вут чĕртнĕ пек

Вěри туса хăварчě,
Хěлхем йăл-ял туса
Вылярě куçсенче.

Атте сӳренě чух
Парлак çинче пěчченçě
Выртса ирттертěм эпě
Шăрăхри куна.
Тăварлă тар тумламěсем
Юхса кěреççě,
Вěтетнě кěленчен
Касаççě юнлă сурана.

Суран сурни çинчен
Калас килет пăртакçă.
Çиле-и?
Хěвеле-и?
Ватă тухтăр иртнě пек
Шур çӳçлě пěлěтсем
Хуллен-хуллен шăваççě,
Мěлкисене туртаççě
Пусă çийěпе.

Атте, ěçне пěтерсенех,
Мана вырттарчě
Сӳренě чух пуçтарнă
Курăксем çине.
Йытпыршипе пиçен шăрши
Кантарчě
Тусанлă шăрăх сывлăш
Сирěлнě чухне.

Шăл çыртрăм эп.
Иртмест сӳре пуçламěш терчě.
Киревсěр лăнкăр-ланкăр
Лакăмлă çулпа

Пырса, шăмма суйланă пек,
Мана сиктерчĕ,
Киле çитерчĕ
Тăнкăр-тăнкăр урапа.

Анне мана
Сăпка ачи пекех чĕркерĕ
Вĕри хăмла тултарнă
Хулăм кипкепе.
Хăмла хăвачĕ
Сурана туртса çӳрерĕ,
Ӳте тарлатрĕ
Мунчари пек йĕп-йĕпе.

Вăрах тăмарĕ,
Килчĕ юмăç карчăк,
Сĕм-суккăр хăй,
Ырхан янахĕ хуп-хура.
Армутипе табак хушнин
Шăрши хăпарчĕ
Ахаль те пăнтăх çапнă
Пăчă сывлăшра.

Килле кĕмен-тĕр
Çавăнпа кĕпи таврашĕ,
Хуралса чĕнленнĕ
Кирĕк ларнипе.
— Тăрса юлман-и сирĕн
Пĕлтĕрхи хур ашĕ? —
Тесе ыйтать вăл
Шăлсăр селĕп чĕлхипе.

Чăнах та пур-тăр
Типĕ самăр хур какайĕ
Пуянсен.
Чĕпсем кăна-ха пирĕн пур.

Кĕрхи каю çерем çинче
Вĕçсе какалĕ
Тăватă уйăхран
Пĕр ушкăн пирĕн хур.

Вилес шăпи тухмасăр юлнă
Ватă карчăк
Мана чĕртесшĕн
Тытнă кукăр турчăка.
Ăна вăл вучахра хĕртсе
Шывра шăварчĕ.
Çĕр çăттăр
Ун пек анкă-минкĕ карчăка!

Шыва вĕрет, унта сурать,
Вара пĕр алтăр
Пырса парать
Хура чĕрнеллĕ аллипе.
Сыв пултăр пурнăç!
Йĕрĕх пĕттĕр!
Ăншăрт кайтăр!—
Тесе ĕçсе яратăп
Эпĕ пĕтĕмпе.

Мăрье мĕлки пек
Арăш-пирĕш çÿçлĕ юмăç
Унта ÿкернĕ сурчăкне
Ĕçетĕп йĕрĕнсе.
Вилес килмест-çке манăн.
Сывă пултăр пурнăç!
Пĕр ешĕл курăк та
Ан хăртăр ĕнтĕхсе!

Ирхи хĕвел çути
Пÿрте кĕрсе çутаттăр,
Çиçсе çÿретĕр вăл

Мăян çăкри çинче,
Мăян çисе ӳсен ачасене
Йăпаттăр,
Вĕсен ӳтне тултартăр
Ĕмĕтлĕ тĕнче!

Лаша пирки чирленĕрен
Лаша тăкакĕ
Ярса пăтратнă
Арăм шыв тата
Мана парасшăн юмăç.
Мăшкăлтăк пылакĕ
Ĕçсе выртма
Хура тусан-и эп кунта?

Умран çухалтăр
Йĕрĕнчĕк ватсупнă карчăк,
Пăрахтăр шыв çине
Куçри пӳрне тăкма!
Ача чухне
Хам тӳснĕ инкеке сасартăк
Сирсе яма
Уçатăп эпĕ куçăма.

Вăран, çунатлă çамрăк
шухăшăм.
Ан çывăр,
Ан вырт
Шапа лĕкки пек симĕс
сĕрĕмре!
Сана ялан курасшăн эп,
Чăваш çĕршывĕ,
Уяв тĕлне тумланнă
Хĕр пекех хитре.

Ӳте таçта çухатнă пек
Çăп-çăмăл эпĕ,
Хирте яри утса
Йӳле яратăп çухана.
Хурт-хăмăр утарне-и,
Улăха кĕреп-и —
Чулсем те хавасланнăн
Туйăнать мана.

Кунти тусан пĕрчи те
Питĕ хаклă маншăн:
Тен, выртнă вăл
Тахçан атте ани çинче,
Ыраш ӳстернĕ ман ӳте
Кервен тăвасшăн,
Тен, пулнă
Эпĕ çакă çĕмĕрт çырлинче.

Сăртран пăхатăп та —
Выртса ман пуç таяс-ши —
Мана пăхса ӳстернĕ
Аслă Силпире
Пиншер шур акăш ларнă пек
Çырма таврашĕ
Тăрать ирхи тĕтре пек
Шурă çеçкере.

Ун хĕрринче
Çăра çаран çилпе ачашшăн
Ыталанса хум хыççăн хум
Кустарнă чух
Ачалăх тĕнчине
Пĕрре кайса курасшăн,
Пĕлместĕп эпĕ,
Темшĕн ăнтăлать ман чун.

2

Пӳ-сийём манăн
Çинçешке кăна пулин те,
Кару тытма
Чипер пĕлетĕп лашана,
Шак сиккипе
Чуптарнă чух та ĕнтĕ
Ӳкместĕп эпĕ,
Ӳкерместĕп сăхмана.

Эпир хавасланса
Выртма кая пуçлатпăр
Силпи хирне çулла
Ут çулнă хыççăнах,
Çĕрле вут-шанкă пуçтарса
Чĕртсе яратпăр
Капан пек пысăк
Ялкăшса тăран вучах.

Кĕлре чăш-паш туса
Кĕрпеклĕ пиçнĕ янтă
Çĕрулмине тăвар сапса
Ахаль кăна
Çиетпĕр çăкăрсăр —
Чĕлхе çинче тути паян та
Пĕтмесĕр юлнăн
Туйăнса тăрать мана.

Эпир — Чир кайтăр! — тетпĕр,
Çӳллĕ çулăм урлă
Сикетпĕр
Хăрăмран та тĕттĕм улăхра,
Телей шăписĕр юлнă
Мĕскĕн те хĕн-хурлă
Тесе каласшăн мар
Пĕрре те хамăра.

Тытатпăр вутпуççи,
Вара яратпăр ирĕк
Эпир ура хуçса
«Линкка-линкка» ташша.
Çĕрле çиçсе тăрать
Тăла сăхман та пирĕн
Патша ачи çинчи
Тумтир пек ялкăшса.

Пире тĕнче курма
Кунта темрен те лайăх,
Пире, парсан та,
Кирлĕ мар çăтмах.
Çĕрле нӳрленнĕ сывлăшра
Çӳренĕ майăн
Куратпăр
Курăксем çинче нумай ахах.

Ахах пек çутă хуртсене
Эпир пухатпăр.
— Эпир камсем! — тесе
Кокарда вырăнне
Икшер-виçшер йĕрке хуртсем çакса
Тухатпăр
Сайралнă кивĕ
Çăмлă çĕлĕксем çине.

Йĕри-тавра çанталăк шăп.
Çилсем пĕр тапхăр
Тивмеççĕ
Çатăлти çунатлă хăвана.
Кĕсре кĕçенкеленĕ хыççăн
Шăнкăр-шăнкăр
Тăваççĕ
Тихасен хăнкăравĕсем кăна.

Сăхман çинче выртатăп эпĕ.
Манăн куçăм
Йĕрлет пин çăлтăр хушшинче
Пĕрне кăна.
Вăл пултăр
Пуринчен парка та уçă,
Телейлĕ тутăр
Аслă çĕр çинче мана.

Ĕçре пиçме
Алла тĕреклĕ вăй тултартăр,
Шăл витĕр шăхăрма
Вăл патăр çивчĕ сас,
Кĕпе валли
Хирте ăнтса ӳстертĕр кантăр!
Тата мĕскер-ха кирлĕ?
Ман мĕскер ыйтас?

Мана хĕлле
Пĕрмеллĕ кĕрĕк кирлĕ.
Тирне тума
Эппин, ӳстертĕр çич така.
Юрланă чух
Юмарт чĕлхеçĕм пултăр вирлĕ,
Саркайăкла
Хускаттăр юрă-такмака!

Тата пăхса ӳстертĕр
Ман валли чипер хĕр —
Хĕр иртсе пынă чух
Ялта чӳречене
Яри уçса
Пур лайăх çын та хĕпĕртетĕр,
Сăнарĕ ӳктĕр ун
Пур каччăн та чунне.

Авмак куç харшисем çине
Пĕрре пăхсассăн,
Куç харшисен пĕкки кӳлсе
Ман чĕрене
Нумай çулпа çӳреттĕр,
Манăн хӳхĕм сассăм
Янратăр
Кĕмĕл шăнкăрав пек ун чухне.

Эпир кунта пурте
Çич пушăт çăпаталлă,
Тăла-чăлха та, тăлавар та
Урара,
Сăхман çинче те пирĕн
Çичĕ саплăк паллă,
Анчах пуян тесе
Шутлатпăр хамăра.

Эсир чĕресене
Кĕрсе курсанччĕ халĕ.
Унта мĕн чухлĕ пирĕн
Ылтăн та мерчен!
Эпир урхамахсем утланнá
Сахал-и
Çӳретпĕр мухтанса
Юмах-халапсенче!

Çич пуçлă çĕлене
Хĕçпе касса туратпăр,
Пуçра кĕсен, анчах
Тухатпăр патшана.
Çапла чылай юмах-халлап
Ярса выртатпăр,
Сисми ыйха каятпăр
Çăмăллăн кăна.

Епле ытарайми илемлĕ эс,
Ачалăх,
Сана мĕнпе пĕр танлă
Эпĕ тытăп-ши?
Паян та, халь те юлнă
Манăн асăнмалăх
Инçе выртма вучахĕн
Тĕтĕмин шăрши.

3

Пирте, Урал таврашĕнче,
Эсир пулман-и,
Хĕлле килсе туйман-и
Сивĕ сывлăша?
Пит лăпкă пуçланать
Илемлĕ хĕл тăманĕ,
Çиллес çилсем
Вĕрсе иртмеççĕ харкашса.

Малтан çилсем
Хирти юра шăлса шăваççĕ,
Иртеççĕ
Ушкăн-ушкăн тилĕ чупнă пек.
Пăтранчăк пĕлĕтсем тухман-ха,
Карăнмаççĕ,
Тăрать шăратнă хурçă пек
Кăвак тӳпе.

Кĕлпе сĕрсе çутатнă
Пилĕк пуслăх евĕр
Хĕвел хĕп-хĕрлĕ
Курăнса тăрать çӳлте.
Пыра-киле
Усал çилсен хаяр кĕрлевĕ
Асар-писер йĕке пек
Çаврăнать хирте.

Вара тăман кĕрлет
Тăватă-пилĕк талăк.
Кĕртпе хӳсе каять
Пӳрте те хуралта.
Ирех сиксе тухатăн та,
Хайхи сасартăк
Уяр çанталăк
Савăнса тăрать тулта.

Ун чух çынсем
Пĕрер лаша кӳлсе тухаççĕ,
Кӳлеççĕ
Хыçалтан хырса пыма хăма,
Хăми çине тăрса
Хаваслă турттараççĕ
Килкартинчи юра
Хĕвеллĕ урама.

Картийĕнчен тухать
Ĕне те ушкăн сурăх,
Мекек сасси те мĕкĕрни
Каять уя.
Пӳртрен кăларнă çӳп çине
Темрен те тунсăх
Килсе ларать
Чĕтре хӳреллĕ кăсăя.

Эпир çатан хур йăвинчен
Пăркут тăватпăр.
Сип-сивĕ кун,
Пире шăнтаймăн,
Ан тавлаш!
Тăвайккинчен мулкач хӳтернĕ пек
Анатпăр,
Юри юра
Кĕрсе ӳкетпĕр пăш та паш.

Малтан чӗтретпӗр.
Хур ури пек хӗрлӗ алӑ.
Кайран ӳтре ҫунса вылять
Кӑвар пек юн.
Пӗр пӗлӗтсӗр тӳпе кӑвак.
Хӗвел хӑлхаллӑ.
Кӗртсем ҫинче
Сикет ҫути куҫа ҫиес пек ун.

Пас тытнӑ йӑмрасем
Шап-шурӑ, шӑп лараҫҫӗ,
Турачӗсем
Пӗренесем пек пысӑк халь.
Юланутсем тӑман кӑларнӑ,
Юрттараҫҫӗ.
Малти лаша ҫинче
Эрхип ачи Михаль.

Пурин те лашисем
Туйри пекех йӗнерлӗ.
Сасартӑк
Чарӑнса тӑраҫҫӗ йӗкӗтсем.
— Эй, ырӑ халӑх!
Патшана ҫапса ӳкернӗ!—
Тесе вӗсен янраҫҫӗ
Ҫирӗп сассисем.

Юланутсем каяҫҫӗ вашкӑртса.
Хыпарӗ
Килтен киле
Кӗрсе ҫӳрерӗ ял ҫинче,
Нумай тӑмарӗ,
Халӑх та ута пуҫларӗ,
Кӗрлерӗ анатра,
Пасар урамӗнче.

Эпир, ача-пăча пулсан та,
Илткеленĕ,
Патша камне,
Пĕлетпĕр саккунне ялта,
Атте çуллен
Куланайсем тӳленĕ,
Тӳшек те, сăмавар та
Хунă саклата.

Анне сахал татса памарĕ
Кĕмĕл тенкĕ
Çап-çамрăк чухнехи
Хитре шĕлкеминчен.
Çапла мăйран пăвсах тăрать
Саккун инкекĕ.
Хаяр патша ларать
Саккун арчи çинче.

Епле йăваннă вăл
Патша, шуйттан илесшĕ?
Ăна лекмен-ши
Кир пуканĕ вăрттăн чух?
Вăрра çапла кăнтаççĕ,
Çийĕнчех пĕлесшĕн
Чупатпăр ăнтăлса эпир,
Вĕт-шакăр чун.

Пасартинчен те йышлă
Килнĕ халĕ халăх
Сывланăран
Мунча çинчи пек пăс кунта.
Алшышĕ ывăтса ярсан,
Ӳксе выртмалăх
Юлман
Пĕр пушă лаптăк юрлă вырăнта.

— Якур купса патша чухне
Пире сăхатчĕ.
Тытар-и, тăвансем?
Тытас та çаратас!—
Тесе кĕрлев те шав
Урам тулли тăратчĕ,
Çуратчĕ сивĕ сывлăша
Пĕр ушкăн сас.

— Якур якалтăр!—
Тет пĕр пысăк сас сасартăк.
Чукмар та пĕрене те
Халăх аллинче.
Пурте çапаççĕ.
Шатăртатрĕ тимĕр алăк,
Силленчĕ,
Чăнкăр-чăнкăр ванчĕ чӳрече.

Кĕреççĕ алăкран.
Сиксе кĕретĕп эпĕ
Чӳречерен тӳрех
Лавкка лапки çине.
Тавар нумай.
Хаклисене илме пĕлеп-и?
Кĕсъе тулли
Илетĕп тутлă канфетне.

Мĕскер тата?
Илетĕп эп пăта пĕр ывăç.—
Шăнкăрчие
Йăва тăвасчĕ çуркунне.
Кунтан епле
Тухса шăвам-и ĕнтĕ сывă?..
Сиксе анатăп
Тĕркĕш халăх хушшине.

Пуҫсем ҫинчен,
Хулпуҫҫисем ҫинчен иртетӗп
Алла сулса та,
Урапа та туртӑшса.
Харкашнине илтсе
Хайхи тухса ӳкетӗп
Ҫӑл шывӗ пек
Сип-сивӗ тутлӑ сывлӑша.

— Патша ӳксен,
Эсир, эппин, турра пуҫ усӑр
Ҫаратупа ахаль
Ан ярӑр ятӑра,—
Тесе такам вӑрҫать.
Сасси тухать хӑюсӑр,
Шыва пӑрахнӑ чул пекех
Путать шавра.

Кӑтра Екким иккен,
Кӗперкасси пуянӗ,
Чиркӳ ҫынни,
Сайра виҫ пӗрчӗллӗ сухал.
— Сана парас-и ман
Хӑлха чикки йӑн-янӗ? —
Тесе калать
Лӗксантӑр хӗрӗнкӗ, усал.

— Чипер калаҫ, тӑванӑм,
Сапӑр пул пӑртакҫӑ,—
Ачаш калать Екким,
Анчах та куҫӗсем
Хапха айне пытаннӑ
Йытӑ пек пӑхаҫҫӗ,
Пӗркеленеҫҫӗ ун
Ҫамки ҫинчи йӗрсем.

— Çилленнĕ чух
Пĕрре астив тăварлă пулă! —
Тесе Лĕксантăр
Пулă тыттарать ăна.
Çынсем çăвар тытса кăларнă
Çамрăк кулă
Малтан хуллен çӳрет
Унта-кунта кăна.

Кăтра Екким именнипе
Пĕр-икĕ татăк
Пӳрнисемпе татса
Çăтса ярсассăнах:
— Кунта та çăтă пыр!—
Тесе çынсем сасартăк
Сиккелесе
Кулса яраççĕ лăх та лах.

— Çара пырсем,
Сире шуйттан чирпе хутлаттăр!—
Екким тытать те
Вăркăтса ярать пулла.
— Чим-чим, патша каяшĕ эс! —
Тесе Лĕксантăр
Чупса илсе килет
Ăна пит хăвăрт каялла.

— Ан чăркăш эс,
Карма çăвар, куштан, хăравçă!—
Тесе питрен çапать
Вăл пулă хӳрипе.
— Çиçе пĕтер!—
Çиллес çынсем ăна юнаççĕ
Туратлă патакпа та
Шĕвĕр пӳрнепе.

Çисе пĕтернĕ хыççăнах
Çынсем пĕр харăс
Ăна тытаççĕ
Аллинчен те уринчен:
Çырма çыранĕ хĕрринче
Тухса тăрать пăс
Кĕлпук Санякĕн
Пулса çитнĕ мунчинчен.

— Кунта сана
Хитре патша керменĕ пулĕ,—
Тесе пуян çынна
Хупаççĕ мунчана.
Якур купса пулли,
Ытла тăварлă пулă,
Касса асап кăтартрĕ
Вĕрире ăна.

Патша ўкни çинчен
Пĕлтерекен хыпарлă
Кун шавлă иртрĕ,
Килчĕ питĕ лăпкă каç.
Атте йăваш,
Анчах илсе килме пултарнă
Пĕр кĕленче краççын,
Тăвар та пĕр хутаç.

Пĕр тăтăш хăйчикки çутса
Тинке тухатчĕ,
Куçпуçăм анăратчĕ
Йўçĕ тĕтĕмре.
Шăши куç çеç,
Çапах краççын лампин хăвачĕ,
Хăна пулма
Телейĕм килнĕ пек хитре.

Сётел хушши паян
Пире пурне те капăр,
Ачашшăн калаçатпăр
Ыйхă та килмен.
Тăвар нумай.
Тăвар сапса çисе ларатпăр
Кăмакара пĕçернĕ
Тутлă çĕрулми.

Анне пылак,
Тăварсăр çăкăр пĕçеретчĕ,
Хаваслансах
Ыранлăха лартать чуста.
Апла ыран ирех
Пулать пире икерчĕ,—
Тееттĕм
Тутлă ыйхă пуснă вырăнта.

Купса тăварĕ
Ырă тутă калаймарĕ,
Яла асап
Илсе çитерчĕ тепĕр кун.
Этем ĕнси çинчен
Çăпан пекех каймарĕ,
Патша ўксен те,
Патшалла хаяр саккун.

Эшкер салтак
Яла ўпне-питне ухтарчĕ,
Саламатпа ислетрĕ
Ял çыннисене,
Чылай киле
Хуçасăр тăратса хăварчĕ,
Арçынсене тытса
Асатрĕ тĕрмене.

Атте те ман çакланчĕ
Пĕр хутаç тăваршăн.
Эрне те иртрĕ,
Иртрĕ ĕнтĕ уйăх та.
Курак тăманĕ иртнĕ хыççăн
Кăвакарчăн
Ăшша пула
Кăваклатса ларать тулта.

Эпир, ача-пăча,
Çемçе юртан тăватпăр
Патша мĕлки,
Куçне лартатпăр кăмрăкран,
Вара пурте
Алла пĕрер патак тытатпăр,
Ăна çапатпăр
Кăкăртан та çурăмран.

— Путлан! —
Тесе эпир пĕр харăс кăшкăратпăр,
Патша пуçне
Касса илетпĕр кусарпа,
Ăна çатан шалчи çине
Тирсе лартатпăр,
Шавлатпăр хамăр,
Чупкалатпăр урампа.

Саккун арчи çинче
Патша пекки Керенский, —
Тесе калаçкалаççĕ
Халĕ ял çинче.
Атте килмерĕ.
Пĕлĕт хĕррисем кĕрен-çке.
Вĕри пăхать хĕвел те
Кăнтăр тĕлĕнче.

Лаша йӑптӑх ҫӑмне тӑкмарӗ,
Ырханланчӗ,
Ҫӑмне йӑва тума
Ҫӑлса ларать чавка.
Анне витен ҫӗп-ҫӗрӗк улӑмне
Сирсе антарчӗ.
Епле пулсан та ҫи, лаша!
Ҫитет ака.

4

Лаша ырхан,
Аяк пӗрчи хӑва ҫатанӑн
Тухса тӑрать
Пӗрер-пӗрерӗн темелле.
Ака тума
Хӗллех аттемӗр канашланӑ
Вӑтакасри
Ҫерҫи Ваҫлейӗпе пӗрле.

Хӑла лашамӑра утланнӑ
Туй каччи пек,
Чӑнах та паттӑр
Курӑнса пырать пичче.
Ҫерҫи Ваҫлейӗпе
Ларса пыратӑп эпӗ
Силленчӗк
Тӑнкӑр-тӑнкӑр урапа ҫинче.

Мана пимпи ача чухнех
Илсе ҫӳретнӗ
Таҫта инҫе
Тим шывӗ хӗррине,
Тавлашура чуптарнӑ,
Пушкӑртла вӗрентнӗ,
Кӗсре сӗтне ӗҫтернӗ
Тир хутаҫӗнчен.

Ялтан пӗр виҫӗ ҫухрӑмрах
Илемлӗ улӑх,
Анчах кунта пулатӑп эп
Пӗрремӗш хут.
Ҫӳретнӗ самӑртма
Пин-пин ӗне те сурӑх,
Кунта чӑвашсене кӗртмен
Пестров улпут.

Вӑрҫа кайса аманнӑ ҫын
Ҫерҫи Ваҫлейӗ
Хитре юмах пек
Каласа парать мана:
— Малта ҫӑвать, тет,
Ҫумӑр пек чӑваш телейӗ,
Ахаль тӗртсе яман, тет,
Мурилӗш патшана.

Силпи патне ҫитес чухне
Сиксе анатпӑр
Эпир —
Пичче те, эпӗ те Ваҫлей пичче,
Сип-сивӗ шыв ӗҫсе
Ура тӑсса выртатпӑр
Тӗве кӗҫҫи пекех
Ҫемҫе ҫерем ҫинче.

— Кутемепе кӗркке пулла
Улпут юратнӑ,—
Ваҫлей пиччемӗр
Каласа парать пире.—
Саккун илсен,
Пулатпӑр хамӑр та хӑватлӑ,
Пулла сӗрекепех
Сӗретпӗр Силпире.

Паян каçпа кунта
Вăлта яма килетĕп.
Хĕп-хĕрлĕ пăнчăллă кĕркке
Пире юрать.
Çитерĕп-ха сире,—
Тесе Çерçи Ваçлейĕ
Сиксе тăрать те
Урапа çине ларать.

Лаша та чарăнчĕ,
Шыва ытараймарĕ,
Кĕрекаçран
Каçса вăл шăмпăл-шампăл тунă чух
Силпи таса тĕпне
Пĕрре те пăтратмарĕ.
Сиксе тухас пек курăнса выртать
Çавра вутчуль.

Сукмак пек çул.
Каçхи пек тĕттĕм чăтлăх витĕр
Эпир хулленçĕ
Хăпаратпăр тăвалла.
Пур кайăкăн чĕре юрри,
Çурхи кĕвви те,
Ян-ян кайса тăрать
Чуна хускатмалла.

Уçланкăра сасартăк
Асамат кĕперĕ
Ялтранă евĕр
Йăлтăр-йăлтăр вĕлкĕшсе,
Пин тĕслĕ çеçкесем çинче
Çĕршер-çĕршерĕн
Вĕçеççĕ
Темĕнле те тĕслĕ лĕпĕшсем.

— Кунта, ачам, хитре,—
Тесе Çерçи Ваçлейĕ
Алне тăсать те
Калаçать каçса кайсах.—
Пестров улпут
Кунта паян епле килейĕ?
Кунта хуçи камсем?
Эпир, эпир анчах.

Ялта мана
Çерçи тесе кулса ят панă.
Çерçи йăви çеç пулнă
Чалăш килĕмре.
Хаваслă чух, ачам,
Пур уçă сассăм манăн,
Пĕлетĕн-и,—
Итле!
Саркайăк пек хитре.

— Шуратăл хĕррисем,—
Тесе хайхи пиччемĕм
Ярать юрра
Кĕрлен вăрманĕ тăршшĕпе.
Вар тăрăх янраса
Сасси калла килет-мĕн.
Вылять вал
Чăштăр-чăштăр ăвăс çулçипе.

Яр уçăлса каять
Хĕвеллĕ анлă алăк,
Кăлканлă хир
Яри тухса выртать ума.
Кăвак çутлах тăрса
Шăпчăк ыйхиллĕ халăх
Килсе кунта пуçланă-тăр
Ака тума.

Мишавайсем шăпа ярса
Пире те панă вырăн,
Ваçлей пиччен ани те ака
Юнашар.
Сухаçă шăхăрни те,
Кăшкăрни те ырă,
Янрать
Хивре явтарнă пушă шăрт та шарт.

Унта-кунта
Хĕрӳ вучах кăларнă тĕтĕм
Юпа пек тӳрĕ,
Кĕвелĕк пек кăвак.
Ака апачĕ пĕçерме тесе
Кунта эп килтĕм.
Пухса килес-тĕр
Типĕ çапă та кăвайт.

Йӳçсе ан пăсăлтăр ман лакăмри
Уйранăм!
Чавса лартатăп эпĕ
Нӳр тăпра ăшне.
Эп çăкăр хутаçне,
Атте каланăн,
Çакса хуратăп
Каçăртнă турта вĕçне.

Серте яшки пĕçерĕп те
Хавас кĕсре пек
Çиес килсе
Кĕçенĕ манăн чун кунта.
Шĕвик-шĕвиккĕн шăхăрса
Утатăп эпĕ
Пестров улпут канса
Çӳренĕ вăрманта.

Кивелнĕ çапă айĕнчен
Вĕçсе тухать пĕр карăк.
Тивместĕп йăвуна,
Пулас килмест усал.
Шиплетчĕр чĕппӳсем!
Инçех те мар сасартăк
Кĕрлет пĕрре те иккĕ,
Виççĕ те пăшал.

Кунта çитсех тăраççĕ
Сасăсем хăрушă.
Шыв сапнă пек
Чĕтрев ерет ман чĕрене.
Серте те пултăран
Татмасăр эпĕ пушă
Тухатăпименсе
Уçланкă хĕррине.

Салтак нумай,
Йĕвенсемпе кăрт-карт туртаççĕ,
Лашасене хĕртсе
Яраççĕ сиккипе.
Этемсене хуса çитеççĕ те
Çапаççĕ
Пуçран та, çурăм тăрăх та
Нухайккипе.

Мĕскер тума пултарĕ ял çынни,
Сухаçă?
Тилхепепе çапас-и
Хĕçлĕ йĕксĕке?
Çураннисем
Çарран ура тапса тараççĕ,
Лаша утланнисем
Çил пек вĕçеççĕ-çке.

Пичче те манăн
Хăвăрт лашине тăварчĕ,
Утланчĕ те
Чăмтарчĕ чăтлăх хушшине.
Турат пырса лексе-тĕр
Сирпĕтсе хăварчĕ
Çурхи çăмран пустарнă
Шур шĕлепкине.

Эп хурăн тăррине
Çăп-çăмăл хăпаратăп,
Ура усса ларатăп
Пĕр турат çине,
Хурланнипе
Йĕрсе ярас пекех пăхатăп
Пичче хирте
Хăварнă акапуç çине.

Хăватлă çапăçса ĕшеннĕ пек
Хастаррăн
Каяççĕ утлă салтаксем.
Малта пĕр урапа.
Выртса пырать унта
Васлей пичче, мăнтарăн.
Анна çыхсах пăрахнă
Вăрăм пăявпа.

5

Çил амăш ачипе пĕрле
Татти-сыпписĕр
Йĕрсе улать те,
Чарăнмасть те мăрьере.
Тип-типĕ хурăн чĕллине чĕрсе
Кĕрхи çĕр
Юмах ярса ларма
Илемлĕ ăш пўртре.

Атте-аннемĕр
Сак тулли ача-пăчаллă,
Хури те пур,
Çырри те пирĕн хушăра.
Эпир, вĕтти-шакки, тăваттăн,
Сакăр алă,
Пĕри шута кĕмен,
Сикет-ха сăпкара.

Аннемĕр çип арлать,
Йĕки ун кăлтăр-кăлтăр
Кусса çӳрет
Хăма урайăнваррипе.
Пире нимех те кирлĕ мар,
Юмах çеç пултăр,
Вара пире юрать
Çăмахсăр та шӳрпе.

Анне юрла-юрла
Юмах юптарнă майăн
Сисместĕн,
Ыйхă ерипе пусать пире.
Куратпăр тĕлĕкре
Кăвар çунатлă кайăк,
Çĕлен курсан кăна
Тăр-тăр чĕтрет чĕре.

Пĕр сассăр уçăлать
Тирпе тыттарнă алăк,
Сив сывлăш явăнса
Пӳрте кĕрсе тулать.
Атте килет.
Çăра пас тытнă шур сухаллă.
Тумне хывман-ха,
Каллĕ-маллĕ уткалать.

— Каллех тустарчĕç-и?
Кама тытса хĕнерĕç,
Сана паман-и янахран? —
Ыйтать анне.
— Ун пек ишмек тума
Советăн çук ĕнерĕ,
Пурне те ирĕк çитнĕ
Юрлă çынсене.

Пур харама та
Питĕрте тытса силленĕ,
Кутран тапса кăларнă
Пысăк вырăнтан.
Улпутсене çапса хирме
Калавă Ленин,
Чи тĕрĕсаслă çын,
Чăнах та хамăр халăхран.

Сан пек шĕшле те
Вĕренме çул пултăр! —
Тесе çырсах кăларнă
Çĕнĕ саккунта.
Вĕренĕн,
Аннӳне туянăн пурçăн тутăр,
Мана юрать, ачам,
Такансăр атă та.

Атте çапла калать,
Пӳртре тумтир те
Хывмасăр уткалать,
Каллех утса çӳрет.
— Çапла пулинччĕ самана!
Вара хĕн пурнăç иртĕ.
Пĕрре кăна,
Пĕрре ырри килинччĕ, тет.

Эпир, ача-пӑча,
Сумкка ҫакса шкула каятпӑр,
Чышкаланса
Юра ӳкетпӗр чӑш та паш.
Тӑрса утса пыратӑп эпӗ.
Шӑлтӑр-шӑлтӑр
Шавлать ман туртмара
Темле те кӑранташ...

Килеҫҫӗ утлӑ салтаксем.
Саламата лекеп-и?
Чӗнесчӗ Ленина
Пур халӑх ячӗпе...
Сасартӑках сехре хӑпса
Вӑрантӑм эпӗ.
Ҫамка та, урасем те,
Ҫурӑм та йӗпе.

Кӗҫҫе ҫинче ҫывраттӑм эп.
Анне выртарнӑ
Тӳшек ҫине:
Ҫемҫе юр курӑннӑ мана.
Анне ӑҫта-ши?
Илтӗнет ҫынран пытарнӑн
Сасси сӗм-тӗттӗм кӗтесре
Пӑш-паш кӑна.

— Чунран нихҫан та хӑйпӑнми эс,
Пӳлӗх турӑ,
Сыхлаччӗ Ленина!
Хӳтле ун саккунне!
Юрлисене юратаканӗ,
Ун пек ырӑ
Этем килмен хальччен
Пӗрре те тӗнчене.

Эй, туррӑмҫӑм,
Ҫӳлте пулсан та, эс пӗлен-тӗр
Хӑватлӑ Ленина,
Чи ӑслӑ этеме.
Ӑна пилле!
Вӑталӑх ачана вӗренттӗр,
Кӑтарттӑр ҫул
Вӗри куҫҫульсӗр ҫӳреме.

Нумай куҫҫуль юхтарнӑ эп,
Чура хӗрарӑм,
Тӗл килнӗ ҫул ҫинче инкек,
Инкек анчах.
Хӑй ашшӗ-амӑш пек,
Кӑпшанкӑ пек мӑнтарӑн
Ан пултӑр ман
Ытарайми ача-пӑча.

Санран ҫич хут та
Эпӗ йӑлӑнатӑп, турӑ.
Сыхлаччӗ Ленина,
Сыхла ун саккунне!—
Чӗркуҫленсе ларса
Нумай-нумай кӗлтурӗ,
Пӗлмерӗ эп выртса итленине
Анне.

Кӑвак ҫутпа сиксе
Тӑратпӑр тӗпӗр-тепӗр.
Тулта катанпир сарнӑ пек
Шап-шурӑ юр.
Ӗҫчен пулма
Малтан сукмак хывасшӑн эпӗ,
Анчах атте ҫӑпатисен
Сукмакӗ пур.
Чи аслӑ ҫын саккунӗ

Килнĕ питĕ вирлĕ,
Ура çине тăратнă
Пĕтĕмпе яла.
Вĕçет ялав
Якур лавкки çинче те хĕрлĕ,
Хура хурал пӳртне те
Хĕретет ялав.

Ватти те, çамрăкки те
Пĕлĕт пек тухаççĕ,
Утаççĕ
Чукмарпа та тимĕр сенĕкпе.
Малта лашаллисем
Ялав тытса пыраççĕ.
Ахаль тухман.
Пурте сунар пăшалĕпе.

Шалтикасран
Çерçи Васлейĕ тĕпĕр-тепĕр
Сиксе тухать утпа,
Кӳсекĕ — аллинче.
— Ăçта, Васлей пичче? —
Чупса пыратăп эпĕ.—
Ăçта капла çиллес
Каятăн эс, пичче?

— Ых-ых!
Йăкри-макри паратпăр ĕнтĕ,
Кама?
Пĕлетĕн-и?
Тыллатпăр Пестрова!
Куратăн-и!—
Кăтартрĕ вăл,васкать пулин те,
Якур лавкки çинчи
Хĕп-хĕрлĕ ялава.

*1955—1957*



# СИЛПИРИ АСАМАТ КЁПЕРЁ

1

Пичче те эп те
халăх йышĕпе
çуракине тухсан,
кун сивĕ марччĕ,
пиншер пăта
çапса тултарнă пек,
кăвак тӳпе
тăрисемпе янратчĕ.

Хĕл тарнă Силпирен
çарапакка.
Манса хăварнă
тумĕ курăнатчĕ —
вак пĕлĕт ӳкнĕ пек,
лапка-лапка
кивелнĕ юр
ту хушшинче выртатчĕ.

Ана та ман
сар хĕвелпе пĕрле
пырса хĕнесшĕн
çиллĕм тулхăратчĕ,
юра аннемĕр
каçалхи хĕлле
курайманни,
ăна вăрçни асраччĕ.

— Пур çын та
выльăх выçă виличчен
вăтантăр юр,
юр хăвăрт кайтăр! — тетчĕ,
хура курак
ăш кăнтăр тĕнчинчен
карма çăварлă
килессе кĕтетчĕ.

Хăй чунĕ тарăхнă пирки
текех
юра çилленнĕ вăл,
юра ылханнă.
Кăçал хĕл пулчĕ
пĕлтĕрхи пекех
хăш чух йĕпе,
хăш чух хура тăманлă.

Тĕнче арманĕ авăртса
шур юр
крупчаткă çăнăхне
тăкса тăратчĕ,
вара анкартине
килсе маттур
мулкачă ирсерен
сукмак хыватчĕ.

Анкартисем,
çулла вирт янă пек,
кăвар хырса çунтарнă пек,
çараччĕ,
уяр çулсем те
вăрçă иртнипе
йĕтемсенче
мăян урса кашлатчĕ.

Вăрри çиме юратчĕ
халăха,
ун тунипе
тымарĕн перекечĕ
пулма пуçтарнă хыççăн
кăлăхах
мăнтарăн выльăх
хирĕлсе вилетчĕ.

Ултӑшар ураллӑ
йӗкӗр капансем
ларни асра анчах
юмах хӑварчӗ.
Йӗтем ҫинче те
шавлӑ кӗр ҫитсен
вӗҫместчӗ
ӗлӗкхи пек кӑвакарчӑн.

Пуяннисем
тыр вырнӑ хыҫҫӑнах
хирте ҫаптарнӑ,
шӑтӑка пытарнӑ,
ҫиетчӗҫ кӑнтӑрла
ыраш ҫӑмах,
ҫӗрле анчах
апачӗсем юр-варлӑ.

Вӗсем какай шӑрши те
аякка,
кулач тути те
каясран хӑратчӗҫ,
ял халӑхне систермӗш
кӑмака
хура тӑман чухне анчах
хутатчӗҫ.

Шӑлт-шалт хапха та
алӑк питӗрсе
пуян килйыш
апат ҫиетчӗ.
Пуян марри те
тӑр-тӑр чӗтресе
хӑй татӑкне
сыхлас пирки чееччӗ.

Пур çын та
тăрантасшăнччĕ хăйне,
хăйне анчах
пăхасшăн тăрăшатчĕ.
Шăши те тухса тарнă
анкартне
йĕр хывакан
мулкачă çеç айванччĕ.

Çӳретĕрехчĕ
йăкăлт-якăлт чун,
юр кĕрчĕ
пултăрахчĕ унăн çурчĕ!
Анчах
ман тăхăнса тухма ун чух
хăлхаллă
ăшă тирлĕ çĕлĕк çукчĕ.

Сукмакĕ
вĕрлĕк урлă каçакан
пĕр вырăна
пичче йĕс мăйкăч хучĕ,
кĕрхи така пек
самăр кăрсака
пĕрре ирпе
йăтса килсе йăл кулчĕ.

— Кур, савнă шăллăм!—
терĕ вăл мана,—
Екким çеç мар,
паян эпир те.
Ялти пур чаплă çĕлĕкрен
мала
эп хам çĕленĕ
хӳхĕм çĕлĕк иртĕ.

Мулкачăн
анлă çурăм тĕлĕнче
йăр-яр сĕвем хура.
Тирне аттесĕр,
хăех сӳсе эхлетнĕ чух
пичче
епле хаваслине
эсир пĕлсен-тĕр!

Тире
туратлă пĕр патак çине
карса çыхса хурса
вăл туртăнтарчĕ,
ăна вĕри
çӳлти сентре çумне
çакса
пире пурне те савăнтарчĕ.

Тир типнĕ хыççăнах,
пичче ăна
кăвас тĕп çĕприпе сĕрсе
çемçетрĕ,
çип тытрĕ,
виçрĕ манăн çамкана,
пуç кăшăлне виçсе те вăл
çӳрерĕ.

Ахаль тир мар,
укçа хăй умĕнче
сĕтел çинче выртать пек вăл
хĕрхенчĕ.
Хăш чух хаччи
чĕтрерĕ аллинче,
хăш чух именнипе
çамки йĕпенчĕ.

Сулахайне
çамки çумне тытса,
вăл сылтăм аллипе
пĕр пĕчĕк татăк
касса кăларнă чух
тăп чарăнса
каятчĕ
тарăн шухăша сасартăк.

Чăн вата çĕвĕçĕ пекех,
пичче
каллех ман çамкана
çиппе виçетчĕ:
— Ку çурăм тире́
çĕлĕк çамкинче
илемшĕн те ăшшишѐн
пултăр,— тетчĕ.

Вăл хуйхăрнă пекех
сывланине,
çĕленине
ура çинче тинкеррĕн
пăхса тăратчĕç
аттепе анне,
кӳрше çӳретчĕç
иккĕш те пĕрерĕн.

Пĕр вăрăм талăкран
çĕрле пичче
мана
хăлхаллă çĕлĕк тăхăнтарчĕ.
Хĕвел те уйăх,
таврари тĕнче
хама мухтас пек
чунăм ман хăпарчĕ.

Тӳсме те çук
хаваслăхăм пирки
пур çăлтăра
тухса калас килетчĕ.
Чăнах та
манăн çĕлĕкĕн çамки
йăр-яр хураччĕ,
хитререн хитреччĕ.

Атте пĕр харăс
çичĕ-сакăр хур
тата вăл
вăкăр пуснине эп курнă —
Нихçан та эп
пулман капла маттур,
тула тухса
капла сикмен кĕрт урлă.

Вунтăваттăри пичче
йĕс мăйкăчпа
мулкачă тытнă чухнехи пек
пирĕн
уяв пулманччĕ,
пĕтĕм килйышпа
эпир ларманччĕ
апата кĕр-кĕррĕн.

Çурри
мăянлă туллă хуплăва
анне
вĕри кăмакаран кăларчĕ,
пире кĕрекере
сава-сава
чи пысăк татăкшар
касса тыттарчĕ.

Эпир пурте
пуян пек ларнипе
пӳртре мачча та
ҫӳллӗ курӑнатчӗ,
пур шӑммине те
тутлӑн ӗмнипе
ҫӑвар маччи те,
пыр та кӑтӑкланчӗ.

Такам сасартӑк
халсӑр тапнипе
чӗтренчӗ алӑк,
уҫӑлас темерӗ.
Атте хӑй уҫрӗ,
ушкӑн сурӑх пек
шур паслӑ сывлӑш
явӑнса ҫӳрерӗ.

Атте кӗтсе,
вӑл алӑк хупиччен
анне ҫиллес каларӗ:
— Ҫил ан вашкӑрт!
Аран килсе кӗрет
Рашит пичче,
атте тату юлташӗ,
ватӑ пушкӑрт.

Вӑл тӑчӗ
шурӑ паслӑ чаппанпа,
сӑмах чӗнесшӗн пулчӗ те
шӑпланчӗ,
те ырнипе,
те вӑл хаваслӑхпа
палт кайрӗ,
йӑкӑлт-якӑлтах йӑванчӗ.

Эпир ăна
уша сакки çине
вырттартăмăр.
Шак хытнăччĕ тумтирĕ.
Таçтан хур çăвĕ
тупрĕ те анне,
пÿртре пуçланчĕ
тĕркĕш вăхăт пирĕн.

Хăна тумне хывса,
урисене
аттемĕр нăтăр-нăтăр
лутăркарĕ,
йăтса вырттарчĕ
кăмака çине,
вĕри апат та
тутанма каларĕ.

Чĕнмерĕ
ватă пушкăрт ирчченех,
ыйха вăл путрĕ
çичĕ-сакăр каçшăн,
тул çутăлнă чухне
мĕлке пекех
пуçне çĕклерĕ вăл
пÿртре курасшăн.

— Пире манманшăн
пысăк тав сана!
Тата килме
яр-уçă пирĕн алăк,—
тесе анне пуç тайрĕ те
ăна
тыттарчĕ вăл
хуплу пĕр татăк.

Агай каларĕ:
— Пĕтрĕ выҫлăхпа
ача-пăчам та,
вилчĕ арăм.
Пĕлместĕп,
темшĕн тӳсĕмлĕ чунпа
пĕччен ҫĕ юлтăм эп,
ватти, мăнтарăн.

Вилес килмерĕ
килĕм-ҫуртăмра,
сикес килмерĕ ман
хĕлле вакка та,
сире курасшăн утрăм,
хапхăра
хам вăйсăр уҫнине
эп астăватăп.

Вăл кăмака ҫинчен анса
пӳртре
ӳкес пекех тайкаланса
ҫӳрерĕ:
— Мана вилсен те
чĕртнĕшĕн сире
рехметĕм
ĕмĕр-ĕмĕр пултăр,— терĕ.

Вăл аттене
Тим шывĕ хĕрринче
савса парнелĕх
тĕве тирĕ панă.
Анне кĕҫҫе пустарнă,
ун ҫинче
мана
хура кĕрхи ҫĕрле ҫуратнă.

2

Асран кайми
чи паллă ирхине
ыйха вĕçтертĕм те
хавассăн
тухса
пур хамăр ял çыннисене
ман шухăш килчĕ
хăвăрт курăнассăм.

Сыратăп эпĕ
çĕнĕ çăпата,
çемçе мулкачă çĕлĕк
тăхăнатăп,
ăна анне курман чухне тулта
хăяккăн та
вĕçкĕнтерех лартатăп.

Хăй шуррăн килнĕ чух
вĕре-вĕре
пур çăлтăра
сўнтернĕ шурăмпуçĕ.
Çил-тăвăл иртнĕ хыççăн
тĕнчере
тавралăх кăн-кăвак та
янкăр уçă.

Вĕçкелесе выртать
çуран тăман,
калать вăл
çип арланă евĕр кĕвĕ.
Ĕçчен çерçи те
тăранма тухман.
Ăна сиккелеме
юр кăчăрт сивĕ.

Пĕр çын та курăнмасть.
Çапах
кама пулин те
çĕлĕк кăтартасшăн
пасар урамнелле
утатăпах,
туятăп пуçăма
мунча пек ăшшăн.

Кунта мĕлке,
лере чылай мĕлке
сасартăк шурă юр çинче
хуралчĕ.
Таса ир чух
хăрушă инкеке
ял варринчех
эп халь курасшăн марччĕ.

Çĕрле хура
çиллеслĕ çил-тăман
çĕре ишсе ватас пек
кутсăр-пуççăр
урса кĕрленĕ чух
ăна пăхман,
çынсем танккана
вăйсăр-халсăр выççăн.

Чылайăш
сарлака çеçенхирте
çилпе йăваннă та
юрпа хупланнă.
Кусем ялта та
кĕреймен пÿрте,
куç хупнă,
тутă çынсене ылханнă.

Мана анне:
— Пепекĕм, пĕчĕк чух
ан шухăшла,
çӳре те савăн! — тетчĕ.
Пулас-и манăн
чул пек сивĕ чун?
Куç кулнă чух та
чунăм ман йĕретчĕ.

Ман тантăш тусăмсем те
пĕчĕклех
инкек-синкек те,
сивĕ те,
вĕри те
тӳссе ăнланчĕç
ваттисем пекех
пурне те вăрçă витĕр,
выçлăх витĕр.

Тĕнче курса тăма
сан пур куçу,
илтме
чанках тăрать хăлху та.
Тавралăха тылларĕ
икĕ çул
хăрушă вăрçă
çитмĕл çичĕ хут та.

Кунта
Колчак адмиралпа пĕрле
генералсем
сехмет акса çӳрерĕç,
куллен кунах
шап-шурă юра хĕлле,
хура çĕре
çулла юнпа хĕретрĕç.

Хĕçе хĕç
хирĕç тăнă халăха
нумай вĕлерчĕç
персе те, çакса та,
ачасене
хăварчĕç тăлăха
пăлханнă ялсенче
кирек ăçта та.

Хăй вилĕмне сиссе
тавралăха
йĕп юлмиччен çаратрĕ
шурă гварди,
пусса пĕтерчĕ
пĕтĕм выльăха,
пÿлме тĕпне те вăл
шăлса хăварчĕ.

Пулькkесемпе,
етресемпе
тулса шăп пулчĕ
вăрçă иртнĕ вырăн.
Чĕркелесе
кăшт вăрлăх акнипе
унта
парка шăтса тухмарĕ тырă.

Çитменнине —
инкек çине синкек.
Вирт янă пек ĕнтмелĕх,
çунтармалăх
тапранчĕ
кăмака çăварĕ пек
вĕри вĕрсе тăрса
уяр çанталăк.

— Эх, çумăр, кил! —
кĕлтурĕ йăлăнса,
уйчӳк ирттерчĕ
аптăранă халăх.
Пулсан та пулчĕ тырă
макăрса,
çĕре выртса
тымарĕпе çăлмалăх.

Чăваш
масар çăварлă выçлăхпа
тĕл пулнă,
тырăсăр юлса тертленнĕ,
ăна епле пулин те
апатпа
кĕтсе илме
авалтанах вĕреннĕ.

Сиксех тухмарĕ ун
сехре хăппи.
Ĕçчен ялйыш
çу варринчех йĕркеллĕ
пуçтарчĕ кулленех
йĕлме хуппи,
патрак тымарĕ те
юман йĕкелĕ.

Аттемĕр ăслă пулчĕ
ун пирки:
— Пӳрне ĕмсе
вилес килмест-и? — терĕ,
Ем-ешĕл вăрманта
çăка кăчки
пухма пире,
ачисене, çӳретрĕ.

Эп хамăн чухăн халăхăм
ялта
чун вĕççĕн çеç
сывланине сисетĕп,
кукка-йысна пек
çывăх пушкăрта
чĕре сури парас пек
хĕрхенетĕп.

Авалтанах
пуян çеçенхирте
тăраннă пушкăрт,
выльăх-чĕрлĕх тытнă.
Вăл тырă хăй
акса курман пĕртте,
ака çĕрне
тара парса вăл сутнă.

Тăван ялта
çĕр хĕсĕк пулнипе
атте те
пушкăртсем патне каятчĕ,
Тим шывĕ хĕрринче
кивçен йӳнпе
хăйма пекех
çемçе çĕр туянатчĕ.

Тӳлетчĕ тырăпа
вăл килĕшсе
кайран,
вырса-çапса пуçтарнă хыççăн.
Пăхма хавасчĕ
ырă пĕлĕшсем
пире хăйматлăх пек,
тăван пек уççăн.

Кĕсрен шур кăпăклă сĕтне
унта
хĕвел тухиччченех
тăрса ĕçеттĕм,
вăй тапнипе
тытаттăм эп утă,
çунат туяннă пек
унпа вĕçеттĕм.

Шăл витĕр эпĕ
çивчĕ ши! те ши!
шăхраттăм,
чарусăр çил те хăлхара
шăхратчĕ.
Шăхлич-курай та
манăн сас йышши
хăй кĕввине
ту аркинче калатчĕ.

Чĕп-чĕрĕ
çутçанталăк хитрине
Этем ачаранах —
туйса çӳретĕр.
Çакна вĕрентнĕ
пушкăрт халăхне
мерттес теме
паян та эпĕ хатĕр.

Ăна вăрçă
Тим шывĕ хĕрринче
силлерĕ,
выльăх-чĕрлĕхсĕр хăварчĕ.
Кайран шăрăх çанталăк
хирсене
кăвар пек ĕнтрĕ.
Курăк типсе ларчĕ.

Эсрел пек выçлăх
вилĕм çавипе
пӳртрен пӳрте,
çынран çынна çӳрерĕ,
шыва та,
сывлăша та чир-чĕрпе
тултарчĕ вăл,
пур чĕррине йĕрлерĕ.

Вилнисене
Тим шывĕ хĕрринче
çĕре чикме те çын юлмарĕ.
Мĕнпур чĕрри
хăй килĕ-çуртĕнчен
хĕл варринчех
аран тухса танккарĕ.

Вĕсем килсен çĕршерĕн
кам килте
хăна пек кĕтсе илĕ,
алăк уçĕ?..
Никам та тутă мар.
Тутарĕ те,
чăвашĕ те,
ытти те хăй халь выçă.

Хăйсен те ӳчĕ
типнĕ хевтинче,
Çатан пек палăрса тăрать
шăмшакĕ.
Тухса тарать
чылайăш ялсенчен.
Телейлĕ мар
хĕл çулĕпе сукмакĕ.

Вĕсем ялан ӳкеççĕ
месерле,
кăвак тӳпенелле
пăхса выртаççĕ,
кулач чĕлли пек
сарă хĕвеле
курса
тӳшек пек юр çинче хытаççĕ.

Асав шăллисене
халь хăратма
çĕрле сиксе тухса:
— Ăрьях! —ан кăшкăр.
Килетчĕ тилĕ пĕлтĕр
чăх тытма,
çӳретчĕ качака пăвма та
кашкăр.

Вĕсем кăçал
пырса кĕмен яла,
тытса кайман
пĕр хур та, пĕр пăру та.
Виле çын çинипе
вĕсем ялан
хура çĕрле те,
кăнтăрла та тутă.

Манасчĕ манăн
таврари хуйха,
Сиресчĕ
йывăр шухăша чăл-паррăн.
Мĕн пулнине
илтсех тăрать хăлха,
чĕре сисет,
курма та куçăм тарăн.

Эп хам та, тантăшсем те
çиччĕрех
саманана
виçсе пăхма вĕреннĕ.
Тăнлавăн тирĕ
çитмĕлти пекех,
çамкан та тирĕ
пирĕн пĕркеленнĕ.

Татах та шухăша
путма хушса
чăйлатрĕ
çул çинче çуна тупанĕ.
Çӳрет çĕр тăрăх
вилĕм тăрăшса.
Хăçан хăй вилĕ?
Е хăçан вăл канĕ?

Ирех
Элмикасси çынни хăйне
чăлт-шурă паслă чаппанпа
пĕркенĕ,
масар çине леçме
çуна çине
шаршанлатсах
нумай виле тиенĕ.

Пĕлместĕп,
темшĕн хартлатмасть лаша.
Сасартăк
ман сехре хăпса килӳçĕн
пуç тирĕ иртрĕ
йăш-йăш туртăшса,
çĕкленчĕ вирелле
ман пĕтĕм çӳçĕм.

3

Кушак тăрмаласа
юнлатнă пек,
чĕре сурать пулин те,
мухтанассăм
килсех тăрать
ман хамăн çĕлĕкпех,
утас килет
урамсемпе хавассăн.

Сивве пĕлтерĕш
виçĕ хăлхапа
карталанса
хăпаракан хĕвелĕн
çути ўксен те,
халăх ман чапа
курмиш иртет,
иртсе каять ахаллĕн.

Апла, эппин,
мулкачă тирĕнчен
çĕленĕ
халиччен пулман телейĕм
паян килсе,
пуçа ларни çинчен
пĕлинччĕ чи малтан
Çерçи Васлейĕ.

Шалтикаса
каятăп кăтартма.
Мăрьесĕр пўрчĕ
лутрарах маччаллă.
Пĕлместĕп эпĕ
ним те калама,
Хам çĕлĕке хывма
йăтмастăп алă.

Кӳрше кайсан
эп кивӗ ҫӗлӗке
хул хушшине чиксе
хӗстерекенччӗ.
Юри ятарласа
халь килнӗ-ҫке
мухтавшӑн эпӗ,
ылтӑн пек тӗпренчӗк.

Кӗрсессӗнех
тӗпелелле тӳрех
иртсе тӑма
ман чунӑмҫӑм хӑймастчӗ.
Мунча пек хӑрӑмлӑ
хура пӳртре
ман чаплӑ ҫӗлӗк
курӑнса каймастчӗ.

— Ара, вӑтантӑн-им? —
Ваҫлей пичче
хӑй пычӗ ман ума:
— Ха! — терӗ.
Ман ҫӗлӗке
вӑл кантӑк ҫутинче
хӑй тӑхӑнчӗ,
уткаласа ҫӳрерӗ.

Мана каларӗ:
— Арӑскал шӑпи
сана савса
хӑй пӳлӗх турӑ панӑ.
Вӑл хушнипе анчах
ҫатан юпи
йӗс майкӑчӑ валли
ларма пултарнӑ.

Вăл хушнипе анчах
кăрсак куян
çара анкартине
килсе иленнĕ.
Ку çĕлĕкпе,
ачамçăм, эс паян,
пĕлетни, кăрнатир пекех
илемлĕ.

Çамку çине çитмест
митал анчах.
Ку самана миталĕ —
хĕрлĕ çăлтăр.
Сан хӳхĕм çĕлĕкӳ пекки,
ачам,
тăван ялта пĕрин те
халĕ çук-тăр.

Ачам,
пуçа тулта та ăшă чух
ку выçă хăрăк пурнăç та
хавАслă.
Ун чух туять
тиха пек çамрăк чун
хăйне пур инкекрен те
çӳллĕ, аслă.

Кивçен илмен ăсу
ку сивĕре
шăнса хытса чирлемĕ,
сывă юлĕ.
Ӳссе çитсессĕн
санăн Чĕмпĕре
тухса кайма
çулу хăймаллă пулĕ.

Чăваш та пулмĕ ёнтĕ
тек-текех
хура элчеллĕ мăльăк пек
мăнтарăн.
Эс ху та
Кĕçтенттин пиччӳ пекех
хитре кĕнекесем
çырса кăларăн.

Пуçтарăн эсĕ
шухăш тăрăшса,
мана,
патша вăрçи пăсса хăварнă
янахĕ чалăш
мĕскĕн чăваша,
кăтартăн çырнă чух
чипер сăнарлă.

Курасчĕ
эсĕ ятлă пулнине,
анчах çĕрс кĕме
ман вăхăт çитĕ.
Эп пĕчĕк çын.
Пĕччен тăпрам çине
пырса чимлетмĕ
ирсерен çерçи те.

Сана,
Пăртта йăх-несĕл ачине,
саватăп эпĕ,
чунăмпа шанатăп,
сан çутă
чăмăркка питӳ çине
лартас килмест ман
пĕчĕк шăнана та.

Пире май çавранĕ,
ачам, тĕнче.
Никам та пулмĕ чухăн.
Пĕтĕ тарçă,—
Мана пуçран шăлса
Ваçлей пичче
питех ачашшăн
çĕлĕк тăхăнтарчĕ.

Эп тухнă чух
пин ылтăн урипе
хĕвел
çап-çамрăк улăпла утатчĕ,
хăй тӳперен
çилленнĕ куçĕпе
çăра пас витĕр
хĕрелсе пăхатчĕ.

Нумай ача-пăча
урамсенче
çăварнири пек
шавлă ярăнатчĕ,
шуйттан пек шăхăрса
кĕртсем çинчен
хур йăвипе те
тенкелпе анатчĕ.

Вĕсем çине пăхсан,
ку вылăха
эсир туйса илеймĕр,
хăвăрт сисмĕр.
Мăян çăкри çисен те,
— курăр-ха —
епле хăватлă,
чăрсăр çамрăк ĕмĕр!

Ман кивĕ çĕлĕк
çĕтĕлнĕ пирки
ман вăхăтăм
килте кичем иртетчĕ,
тула сиксе тухасшăн
ман екки
килсех тăратчĕ,
чун та тертленетчĕ.

Сехетĕм çитрĕ!
Хамăн илеме
сасартăк кăтартма
васкаттăм эпĕ,
анчах шалт тĕлĕнтĕм.
Пĕччен теме
пулман иккен
ман чапăм та хисепĕм.

Витленĕ пек
сиксе тухать инкек.
Чăнах-и ку?
Е тĕлĕнтермĕш тĕлĕк?
Пурин те
манăнни пекех иккен
кунта
хура çамкаллă шурă çĕлĕк.

Айван-и эпĕ?
Çĕлĕк мăшкăлне
Чăтма вăй çук.
Мана телейĕм çăлтăр!
Тума калатăп эпĕ
пиччене
пĕр шăвăç таткинчен
хĕп-хĕрлĕ çăлтăр.

Ӑна ҫӗлерӗм
ҫӗлӗк ҫамкине,
тенкел тӗпне
кӑваккӑн пӑрлантартӑм.
Мӗскер юр кӗрчӗ?
Ҫӳллӗ ту ҫине
ирех хӑпартӑм,
урнӑ ҫил пек антӑм.

Хыҫран пӑр! пар!
ҫил-тӑвӑл варкӑшса
ҫӗкленнӗ чух
мӑя хуҫма ансатчӗ.
Ӑна пӗлсен те,
манӑн тавлашса
Пӑртта йӑхне йӑтма
чӗре тапатчӗ.

Эп ярӑннӑ чухне
хальхи тӗнчен
ачи пуласшӑн ҫунтӑм.
Халӑх ҫунтӑр!
Чӑнах
ҫуталчӗ ҫӗлӗк ҫамкинче
ача-пӑчан
пурин те хӗрлӗ ҫӑлтӑр.

Вӑрах тӑмарӗ,
кӑнтӑр ӑшшинчен
хура курак ҫитсессӗн,
иртрӗ сивӗ.
Ҫурхи тӗнчен
малтан шырлансенче
юрларӗ
шӑнкӑр-шӑнкӑр шывӗ.

Шыв мӗкӗрчӗ.
Кӗрлевлӗ паттӑр шыв
ҫырмасенче
пӑра ватса пӗтерчӗ.
Ҫӗр типрӗ те,
хура тӑпран шӑршин
йыхравӗ халӑха
хире чӗнтерчӗ.

Акапуҫне
тасатрӗ хӑйӑрпа
хырса атте.
Тӗренӗ йӑлтӑр-йӑлтӑр.
Силпи хирне
пичче те, эп те халӑхпа
пӗр харӑс кайрӑмӑр.
Силпи вӑй патӑр!

4

Ҫукки темеҫҫӗ
пирӗн килйыша.
Вӑтам шая кӗме
пӑртакҫӑ катӑк.
Хавасланса
кӳлетпӗр ик лаша:
пӗри хӑла,
тепри ҫӳрен, ҫап-ҫамрӑк.

Тепри пӗрремӗш
касӑ хӗррипе
утса пыма пӗлмерӗ,
чӑхӑмланчӗ.
Эп чӗлпӗртен
тытса ҫӳретнипе
ака вӗрентӗвне
аран ӑнланчӗ.

Хăй пĕлнĕ пек
кĕрсе пырать ăса,
хăли пек тăрăшать,
тарлать пулин те,
Ачаш çил витĕр
йăптăх çăм тăкса
утма мехелĕ
кăйттă иккĕшин те.

Тип-типĕ улăм
çинĕ хĕл хута,
кавленĕ хăш чухнĕ
çăка хуппи те.
Арлан тăпри таран
йăта-йăта
çĕре алтма
вĕсемшĕн йывăр питĕ.

Пĕрре анчах
çурпилĕк вĕçĕнче
пулсан та,
хăвăрт ывăнса çитеççĕ,
шур кăпăк
пĕçĕ-каçă хушшинчен
анса тăрать,
хăйсем тăр-тăр чĕтреççĕ.

Вара пичче
пĕр авăк кантарма
çерем çине ярать те:
ырă курăр!
Кĕçентерме те
çирĕп вăй пама
сĕткенлĕ мар-ха
çамрăк ешĕл курăк.

Пăравуспа чупма
çĕркăмрăк пек,
ака утне те
сĕлĕ вучĕ кирлĕ.
Ăна кĕтсен,
çĕр выртĕ лапкипе,
çумкурăкпа хупланĕ,
хăй те чирлĕ.

Ĕнси çине хурать
тилхепине,
пичче ака тăвать
хăех пĕчченçĕ.
Ĕнсе хыçма та
вăхăт ун чухне
ман çуккине
эсир кăштах пĕлсенччĕ.

Хуран тулли
яшка пĕçерекен
кам пултăр пусăра?
Манра — хуçалăх.
Ку вак-тĕвек ĕçре
кирлех иккен
чеелĕх те,
ăс-хакăл та,
ăсталăх.

Пур пирĕн
икĕ пĕчĕкçĕ хутаç:
пĕри шур çăнăхпа,
тепри — кĕрпеллĕ.
Куллен тăр-кăнтăрла та,
ир те каç
çиесчĕ
перекетлĕ те йĕркеллĕ.

Серте, кăшкарути те
пултăран
татса ярсан,
яшка ман тутлă калĕ.
Çапли çапла.
Ку ешĕл курăкран
пиччен пулать-и
шăнăрлă вăй-халĕ?

Чи шăрăхра та
хамăн çĕлĕке
хывмастăп,
Силпире çӳретĕп,
суймастăп эпĕ
кайăк-кĕшĕке,
пурне те:
— Тĕрĕссĕн ăнланăр!— тетĕп.

Пурне те ырă çут тĕнче
сире
хĕпĕртеме те
ĕрчеме çуратнă.
Сиртен пĕри
хăй юррипе хитре,
тепри
хăй вирлĕ вĕçнипе хăватлă.

Эсир мана та
манăн килйыша
тивмен пулин те,
эп усалланатăп:
епле çӳлте пулсан та,
тăрăшса
хăпарăп та
йăвăрсене çаратăп.

Пиçинччĕ тетĕп
тутлăрах яшка,
аптравлă йывăр
шухăшпа утатăп.
Юр-вар апатсăр
тăвăнмасть ака,
имшеррипе
утасшăн мар ура та.

Пичче те, эпĕ те
çурпилĕке
çемçетмесен,
çул килĕ выçă шăллă,
вилме анчах
çакланĕ инкеке
атте-анне те,
йăмăк та ман шăллăм.

Сире пĕрне те тивмĕп
тепĕр çул,—
тесе эп
шăкăк-шăкăл калаçатăп,
вăрманалла,
ту çинелле те çул
тытса пыратăп,
йăвасем шыратăп.

Шаланкăн та, хĕрхин те
кăвăлтин,
ула куракăн,
хурчăкан,
чакакăн
матьтисене,
нумай пулмасть-ха тит
тунисене илме,
çитет чаракăм.

Мулкачă çĕлĕкне
хăш чух тулли,
хăш чух çурри таран
илсе килетĕп,
çăмах пĕрре,
тепре яшка тутли
пĕçернипе
хам тĕллĕн хĕпĕртетĕп.

Пичче мана мухтать.
Кĕрхи вăйпа
илсе парасшăн вăл
пиншак та атă.
Ырханччĕ вăл,
тӳрленчĕ апатпа,
сăмах тупать
хаваслăн калаçма та.

Ман йывăç тăррине
шеп хăпарма
вĕреннĕ аллăмсем
хивре пӳрнеллĕ,
çара уран
чулсем çинчен чупма
ура тупанĕсем
хытса тӳрленнĕ.

Чылай ӳксе
амантрăм пĕвĕме,
чĕртернипе
ман çĕлĕк çурăк-çарăк,
çапах
ака апачĕ пĕçерме
каллех хăпарăп,
çăмарта пуçтарăп.

Чи чăнкă çӳллĕ
тăвăн хĕрринче
пĕр пĕрхĕт кайăк йăвине
куратăп.
Вăл тайлăк
ватă йывăç тăрринче
мунча тăрри пек
пысăк та, хура та.

Унтан персе ӳкес пулсан,
пĕлеп,
саланĕ шăммăм-шаккăм ман
чĕлперрĕн.
Нимрен шикленмесле
çуралнă эп,
чăваш ачи,
Пăртта тавраш еткерĕ.

Пуçтартăм эпĕ
талăк хушшинче
хевте тулли тĕрек,
пуçра ăс-хакăл,
хăпартăм ту çине,
чул хушшинчен
пăхса каларăм эп хама:
— Ан такăн!

Пĕр вĕççĕр çӳллĕхри
чĕрчунсенчен
вăйли те, харсăрри те —
ăмăрткайăк.
Ан чак!
Хăюллă пул эс çĕр çинче!
Вара кирек ăçта та,
ирĕк кайăн.

Ами-тĕр
йăвара ларсан-ларсан
вĕçсе çĕкленчĕ,
ярăнса вăл шурĕ.
Çуначĕ тăршшĕ,
аякран пăхсан,
пулать-тĕр ахăрне
пĕр аршăн çуррă.

Пĕлсе çитместĕп
эпĕ ăнланса:
те пур, те çук
мана хĕрхенмĕш турă,
çапах
кăвак тӳпенелле пăхса,
алла чĕре çумне хурса
кĕлтурăм.

Шанса сурса
йĕпетрĕм эп алла,
ура тĕпне те.
Пултăрах хăватăм!
Телей пек кĕтекен
йăваналла
вăрман кушакĕ пек
ансат хăпартăм.

Умра выртатчĕ
икĕ çăмарта.
Пĕрне илме çеç
пулчĕ ман хавасăм.
Мана сасартăк
илтĕнчĕ таçта
чок! чок! тени,
сехре хăпартмăш сасă.

Тӳс, пуçăм, тӳс!
Ак сик, чĕре,
именчĕк туйăмна
кунта ан пĕрхĕт!
Пуç тăрринчен
хаяр вĕçсе пĕрре,
тепре те иртрĕ
икĕ пысăк пĕрхĕт,

Пĕри çапасшăн пулчĕ
пĕр енчен,
аманнă пек
тискеррĕн сасă пачĕ,
мана тивмерĕ вăл.
Чĕрнисенче
ун чух пыратчĕ
силленсе мулкачă.

Анса пыраттăм эп
сике-сике.
Тепри чĕрнисене
вăлта пек карчĕ,
тапса çĕклерĕ
манăн çĕлĕке,
мана
çуначĕпе çапса хăварчĕ.

Вăл çĕлĕксĕр курсан,
эп пиччене:
— Кивелнĕскере
шыва чулпа пытартăм,—
тесе каларăм.
Ман хамăн ун чухне
хăранипе
ӳтре типменччĕ тар та.

Пуласшăн эпĕ паттăр,
çавăнпа
ман çĕлĕкĕм пирки
суяс килетчĕ.
Ман пурччĕ пĕрхĕт çăмарти.
Унпа
атте те тĕлĕнмелĕх
эп чееччĕ.

Минтер тĕкне те
çĕлĕк кив çăмне
çӳппе пĕрле
пăрахнине тиркеççĕ:
лекет вăл имĕш
кайăк йăвине,
вара пуç çаврăнать
йăва пек,— теççĕ.

5

Пичче ака пĕтернĕ
сăлтавпа
çывратчĕ кăнтăрла.
Ырса исленнĕ.
Аттемĕр килчĕ
вăрлăх тулăпа,
ăна вăл
кӳршĕ çын лавне тиенĕ.

Тĕпренчĕк çĕр
вăл чикрĕ çăварне,
чăмланă хыççăн:
— Вăхăт çитнĕ! — терĕ,
халех
çерем çинчи лашасене
илсе килме,
кӳлме мана хистерĕ.

Чупса вĕçтертĕм,
хытă тăрăшса
тăллисене шăлпа çыртсах
эп салтрăм,
пĕрне утлантăм,
ешĕл сывлăша
шĕвик! шăл витĕр
шăхăрса янратрăм.

Аттеçĕм çакрĕ
хăй мăйне пурак,
унти тулла
хĕвел çинче сап-саррăн
акса çутатнă чух
хура курак,
чавка та хăвăрт пухăнчĕ
пасарăн.

Кăшша! Кăшшуй! —
çап-çамрăк сассămпа
пĕр тарăхмасăр
çуйхатса çӳрерĕм,
ку чух ӳтленнĕ
мăшăр лашапа
çемçе тăпра ашса
сӳре сӳрерĕм.

Путса тăран
мумаллă тăпрара
канать ман чун та,
ывăнмасть ура та.
Кăçал ăнтса
ӳстерĕ вăл тырра,
илтерĕ ман валли
пиншак та атă.

Эпир акса пĕтернĕ чух
пичче
вучах таврашĕнче
пире кĕтетчĕ.
Сип-симĕс тĕтĕмре
такан çинче
хура хуран пăтти
пăш-паш вĕретчĕ.

Атте тулли шыв сыпрĕ те
питне
сăрнай хăмпи пекех
вăл пысăк турĕ,
шыв пĕрхĕтсе
хыткан аллисене
кантра пек заврĕ,
нăтăр-нăтăр çурĕ.

Çамки тирне пĕрсе
хуран çине
тинкеррĕн пăхрĕ,
питĕ пăшăрханчĕ,
пире каларĕ: —
— Халĕ пăтă варрине
пĕр пĕчĕк çăмарта хурсан,
аванччĕ...

Вăл çакă сăмаха çеç
каласса
кĕтеттĕм эпĕ.
Çитрĕ кĕтнĕ вăхăт!
Çӳрен ута утлантăм
васкаса,
хăла ута та
тытрăм эпĕ хăвăрт.

Кайса ярасшăн
эпĕ улăха.
Сăлтав та, кăлтăк та
çук манăн урах.
Атте пире каларĕ:
— Курăр-ха,
кунтах лăс пек
çĕкленнĕ ухлĕм курăк!

Чуптартăм эпĕ
хамăн тĕлĕме.
Ман ăслă шухăш
малтанах чееччĕ,
пиччеçĕм те аттеçĕм
тĕлĕнме
хама маттуррăн
кăтартас килетчĕ.

Эп чаплă
пĕрхĕт çăмарти çинчен
хура çĕрле те
питĕ шухăшлаттăм.
Ан пăсăлтăр!
Ăна çăлкуçĕнче
Чи сивĕ
вăрттăн вырăнта усраттăм.

Ана илсе
чупатăп эп çулпа,
шыв урлă,
шурлăх урлă та сикетĕп,
чуна çурас пекех
хаваслăхпа
пырса çитетĕп:
— Эпĕ килтĕм! — тетĕп.

— Хурам-и
ӑмӑрткайӑк ҫӑмарти!
Ку килӗш пӑттине
хисеп тӑвам-и?
Атте мана ҫилленчӗ:
— Лӑпӑрти!
Чипер калаҫ-ха,
пепӗккем, тӑванӑм.

Тӑрлавсӑр сӑмаху
ҫӗр амӑшне
йӑпатнӑ пек култармӗ,
кӳрентерӗ.
Ҫиллентӗм эпӗ хам та
аттене:
— Чӑваш йӑлисенчен
кулмастӑп,— терӗм.

Атте, ахаллӗн
ан тирке мана.
Пичче те куртӑрах!
Курса тӑр ху та!—
Кӑтартрӑм пысӑк ҫӑмарта,
ӑна
вӗри пӑтта
чӑнах та хутӑм.

Пичче куҫ чарчӗ,
хытӑ тӗлӗнчӗ.
Атте те ҫамрӑк ҫын пекех
ҫуталчӗ.
Вӑл кивӗ шушкӑ
илчӗ хӗвӗнчен,
ҫуршар мана та,
пиччене те пачӗ.

— Сире ĕҫченшĕн
юратса пама
кăна тахҫантанпах
усраттăм,— терĕ.
Сана, Якку,
хайлушăн тав тума
ман халĕ чун та,
ăс та ҫитеймерĕ.

Ачам, ху пулăн
ăмăрт пек хитре,
вĕренӳре
инҫе вĕҫме ҫунатлă.
Килтен ăсанăн
эсĕ Чĕмпĕре,
унта та ҫӳрĕн
пĕкĕнми хăватлă.

Атте антарчĕ
пăтă хуранне,
ăна пĕр чул ҫине
лартса кĕлтурĕ.
Ун пăшăл-пăшăл
вăрттăн сăмахне
эпир илтмен те,
илтрĕ пулĕ турă.

Кĕлтурăм эп те.
Чаплă ҫăмарта
пире паринччĕ
пĕрхĕт вăй-хăвачĕ!
Атте унпа
ҫĕр амăшне кунта
пиллерĕ,
ҫĕр айне чиксе хăварчĕ.

Атте хӑй чунӗ
ҫичӗ пӗлӗтре
утса ҫӳренӗ евӗр
хӗпӗртерӗ:
— Ҫӑра аксан та,
юлнӑ-ха пире
юмарт салмалӑх
ылтӑн тулӑ! — терӗ.

Сахал пулсан та
пӗлчӗ савӑнма,
пур вӑрлӑха
пӗр хутаҫа пуҫтарчӗ,
хӗвел ансан та
ҫӑнӑх авӑртма
вӑл Сарӑ Ҫытӑр арманне
уттарчӗ.

Ӗҫленӗ чух
ирех сиксе тӑма
Силпи ыйхи
пире йӑвантаратчӗ,
каҫ илемне
ачаш чунпа туйма,
куҫпа пӑхма та
самантсем сайраччӗ.

Тавралӑхри кӗвве,
саспа шава
пӗр тӗлӗк витӗр ҫеҫ
хӑлха илтетчӗ,
тӑварлӑ ҫинӗ чух
ҫӗрле ҫӑвар
кунти шыва
кайса ӗҫме чӗнетчӗ.

Пичче те, эпӗ те
çерем çинче
пӗрре
каçа ытарайми ларатпӑр,
тепре
кӑвак тӳпе ялтравӗнчен
куçа илмесӗр
месерле выртатпӑр.

Тӗнчен шӑрши те пур,
хитри те пур
тумлам шывра,
тӗпренчӗк тӑпрара та.
Вӑл чӗррине,
хускалнине
куратӑп эпӗ
халӗ хуранра та.

Пин çӑлтӑр
тӳпере çеç мар,
çӗрле
такан çинчи
хуран тӗпне ӳкеççӗ,
унта
çап-çамрӑк сертепе пӗрле,
сар уйӑхпа пӗрле
сиксе вӗреççӗ.

Çиллессӗр çутçанталӑкра
кунта
мана утма,
выртма чипер пур вырӑн,
пур курӑк та, тӑр шыв та,
кайӑк та,
пур йывӑç та,
пур чул та
маншӑн ырӑ.

Кунта вĕсемшĕн паллă пек
ман ят.
Каяс килмест ниçта та ман.
Ан хушăр!
Мана халь выçă ялăм
туйăнать
усал юмах пек,
тамăк пек хăрушă.

Атте килет
тул çутăлсан анчах.
Шап-шурă çăнăхлă
çири сăхманĕ.
— Каясчĕ,— тет,—
пире кĕтсе мунча
ирех шартлатĕ,
тутланса пăсланĕ.

Хĕвел тухман-ха.
Киремет сăртне
пырса çитсен,
анма тĕке те чăнкă.
Унтан пăхса илсен,
уяр чухне
тухатчĕ улăм витнĕ ял
чăн-чăннăн.

Вăл халь
тĕтре сăхманĕ айĕнче.
Çӳлте
йăмра тăрнашкисем çеç каçăр.
Хускалнă халăх.
Тутлă ыйхинчен
вăратнă питлĕх,
ырă кун сунмасăр.

Çурхи илем чухне те
савăнмасть,
кĕтет паян та ял
инкек-синкеклĕ.
Çунать-и?
Йÿçĕ тĕтĕм палкамасть.
Эппин,
пĕри вăрланă, хытă лекнĕ.

6

Атте хуллен
чараклă йĕркипе
сăртран анма
урапана тăлларĕ.
Лаша утланнă эпĕ —
сиккипе
вĕçме мана чĕнтерчĕ
ял хыпарĕ.

Шыв урлă
лĕнчĕр-ленчĕр кĕпере
силлентерсе
Шалтикаса кĕретĕп,
ута чаратăп,
халăх кĕпĕрех
хĕрленине,
шавланине илтетĕп,

Çынсем тури
Чукмаркассинелле
чупсах васкаççĕ
кăшкăрса пĕр харăс:
— Евьен хĕрарăм хăй,
çапах епле
вăрра вĕреннĕ,
тупнă хуп-хура ăс?..

**Нумай инке те карчăк!**
**— Ай-тур-тур! —**
**сĕрленине**
**илтсе пыруçăн,**
**ман чунăма**
**çĕлен пекех хĕн-хур**
**сăхма кĕрсен,**
**аса илетĕп уççăн.**

Мăрса Палюкĕ
çамрăк ăрура
хăйне ыттисенчен
малта тытатчĕ.
Сăнарĕ хӳхĕм пулнипе
кăтри
хум иртнĕ пек
çамки çинче выртатчĕ.

Вĕреннĕччĕ,
уллах кил-çуртсенче
йĕртермеллех
«Нарспи» ăста вулатчĕ,
тата артистчĕ,
халăх çуртĕнче
ялан Сетнер рольне
анчах вылятчĕ.

Ун мăшăрĕ
Евьенĕ те ун чух
тумлам шывпа
сыпас пекех хитреччĕ.
Нарспи рольне вăл,
çутă ылтăн чун,
йăл ялкăшса вылятчĕ,
тĕлĕнтеретчĕ.

Вӗсем Иванова
юратнипе
ачисене
ят панӑ чип-чиперрӗн:
Сентти ятлин
сар ҫӳҫӗ амӑш пек,
хӑй ашшӗ пек
хура кӑтри Сетнерӗн.

Палюк пичче
ялти пуянсене
памарӗ куҫ уҫма,
хытах хӗстерчӗ.
Ҫӳҫмет Еккимӗн
вӑрттӑн тыррине
вӑл тупрӗ те
патшалӑха леҫтерчӗ.

Колчак килсе тухсан,
сӗм вӑрманта
хӗл сиввинче те вӑл
вӑрах пытанчӗ,
нихҫан манми
вунтӑххӑрмӗш ҫулта
Чапаев ҫарӗпе
пӗрле ӑсанчӗ.

Вӗри тӑхланлӑ
вӑрҫӑ хирӗнчен
килмерӗ хӑй,
хыпарӗ килчӗ унӑн:
Ёпхӳ енче,
Шуратӑл хӗрринче
хӑй хӳхӗм,
чунӗ паттӑр ҫын
пуҫ хунӑ.

Ун савнă арăмĕ
Евьен аппа
епле вара
вăрра тухма пултарнă?
Аçа çаптарнă пек
ку хыпарпа
чĕре ман кӳтрĕ,
ӳтĕм сивĕ тарлă.

Туйсем курма
ял çăкăрлă чухне
çӳретчĕ халăх.
Пурччĕ ун телейĕ.
Вăл килнĕ халь
çынна хĕненине
курса йĕрме-и,
хĕпĕртеме-и?

Аран-аран
утать Евьен аппа.
Чăр-чăр кĕпеллĕ.
Кăвакартнă питлĕ.
Хăйне те,
питлĕхе те патакпа
çапмассерен
янрать кивелнĕ питлĕх.

Çапмассерен
йĕрме пĕлмест аппа.
Хăй упăшки вилсен те
хытă йĕрнĕ.
Тайкаланать
ем-ешĕл урампа,
юлать таптаннă курăк
хĕрлĕ йĕрлĕ.

— Э-эх! —
Вăрларăн çăнăх-и е çўп?
— Ы-х!
Килмест-и санăн йĕрессў те? —
питрен те,
кăкăртан та кўп! те кўп!
пырса çапаççĕ
пур ухмах та сўтĕк.

Евьен аппа ўкет те;
çĕр çинче
ăна йăтаççĕ,
танкăлт уттараççĕ.
— Каллех тунатăн-и? —
çăварĕнчен
лăч-лач параççĕ те
шăлсем катаççĕ.

— Мана
Екким Палюкшăн таварать.
Юри вăл
çанăх ман киле хăварнă...
Евьен аппа
каласшăн тăрăшать.
Чĕлхи юнланнă.
Пичĕсем хăпарнă.

Кулать Çўçмет Еккимĕ:
— Ха-ха-ха!
Этем антра-и!
Кам кайса пăрахĕ?
Пĕрчи те ылтăн чух
эп çăнăха
ют килкартне
кайса сапма, ухмах-и?

Тăратăп эпĕ
ним те илтменçи,
анчах илтетĕп.
Вăрттăн çеç пуплеççĕ:
— Екким хăй мар,
ун сутăнчăк тарçи
пăрахнă,
Евьене тыттарнă,— теççĕ.

Хăйсем те чухăн,
чухăн этеме
ку мăшкăлран
çăласчĕ халь хастаррăн!
Вĕсем Екким патне
кивçен илме
çӳреççĕ тилмĕрсе.
Хăйсем мăнтарăн.

— Ы-ых!
Апла эппин, Екким çине
инкек тиесшĕн-и?
Пĕлетпĕр хамăр!
Пĕр харăс
иккĕн-виççĕн çапнипе
йăванчĕ юн хăсса
Евьен аппамăр.

— Çулпуçĕ Ленин,
ку хĕнӳ çинчен
пĕлсен, сире,
ялйышăмсем, мĕн тейĕ?
Кăштах вăтанăр! —
халăх хушшинчен
çунса пек кăшкăрчĕ
Çерçи Васлейĕ.

— Куратăр-и? —
вăл сулчĕ аллипе.—
Курасшăн мар-и?
Куçăрсем юлхав-и?
Сире ăса кĕме
чĕнсе çилпе
вăл вĕлкĕшет
чул çурт çинче совет ялавĕ.

Ун паттăр упăшки
Палюк ăна
хăй тăкнă
хĕрлĕ юнĕпе пĕветнĕ,
сире, тăванăмсем,
пур пуяна
пăчăртаса тытма,
пăвма вĕрентнĕ.

Екким хўрешкисем
Ваçлей çине
пăхса илеççĕ
вăкăрла куç айĕн:
— Вăрра вĕрентнĕ вăл
хăй арăмне.
Ана ан тив,
вăрра эс ху та кайăн.

Мĕнпур сасса та
хирĕç кĕрешсе
Ваçлей пичче каларĕ:
— Вăрă хăвăр!
— Итле-ха, халăх!—
кăшкăрчĕç лешсем.
— Хăйне хĕнес!
Ватас!
Хăйне суд тăвăр!

— Эп — хам салтак.
Салтак мăшăрĕпе
пĕр айăпсăр вилсен,
ку — ман телейĕм.
Унччен сире
чикесчĕ сенĕкпе! —
хурланчĕ çилленсе
Çерçи Васлейĕ.

Куççулĕ витĕр
пĕтĕм таврана
пăхса илсе,
вăл лешсене юнарĕ:
— Хăрамăп эп,
пĕлтерĕп Ленина:
ку, тейĕп,
мăшкăл, вĕлерӳ хыпарĕ.

Евьен аппа:
— Тав! — терĕ халăха,
хăйне вĕлернĕшĕн
хаяр пиллерĕ:
— Хĕрхенĕр,
ан хăварăр тăлăха
ачасене,
халех вĕлерĕр! — терĕ.

Сетнер тăратчĕ
халăх айккинче,
Сентти те
хăраса тăр-тăр чĕтретчĕ.
Пур çын та пăрăнатчĕ
вĕсенчен,
пыма ача-пăча та
именетчĕ.

— Ачасене те халь
манпа пĕрле
вĕлерĕр! — тенинчен
вĕсем хăрарĕç,
Пахча çатанĕ урлă
хирелле
тарса пытанчĕç
иккĕш те пĕр харăс.

Евьен аппа хитреччĕ.
Ялĕпех
ăна савса
Нарспи ят панă,
анчах Çӳçмет Еккимĕ
хушнипе
масар карти хыçне
ăна пытарнă.

Мана та,
Сенттие те Сетнере
çын çук чухне
масар çинче хăрушă,
çапах эпир çĕрле
сĕм-тĕттĕмре
унта каймарăмăр
ахаль пуш-пушă.

Çурса пĕтернĕ
кĕпепе кăна
пытарнă аппана
выртма сип-сивĕ.
Тăпри çине çерем хурсан,
ăна
ĕçме сапатпăр
пĕр чĕрес çăл шывĕ.

Ан яр, аппаçăм,
чир-чĕр ял çине,
ем-ешĕл çерempe
пĕркен те витĕн!
Чĕрӳ çилленнине,
вăл çуннине
пусартăр пирĕн шыв,
анса çĕр витĕр.

7

Евьен аппан
йĕкреш ачисемпе
çĕрле те, ир те
эпĕ шăкăл-шăкăл
калаçнипе
хама туяттăм пиччĕш пек,
вĕсем ялта
ан курччăр теттĕм мăшкăл.

Вĕсем элчел пурти
чĕр йывăçран
касса хăварнă
ик ачаш туратчĕ.
Вĕсем валли
сĕткен тупасчĕ ман,
тымарлă ырă йывăç пек
пуласчĕ.

Епле пулин те
пĕчĕк чунсене
парасчĕ ман
чĕре сури апачĕ.
Çитместчĕ хамăра,
çапах анне
хăш чух юр-вар та
çĕрулми паратчĕ.

Вĕсем айван-ха,
çиччĕре анчах.
Ун чух ху ăсупа
мĕскер тăватăн?
Чĕртеттĕм эпĕ
килĕнче вучах,
кĕпе-йĕмне те
сĕлтĕпе çăваттăм.

Утçи пуçланчĕ,
пирĕн халăха
картарчĕ вăл
эрнелĕх шурă чатăр.
Çап-çамрăк ушкăн
тухрĕ улăха,
унпа пĕрле
ватти те, ачапча та.

Пурин çинче те
улача кĕпе
ирпе кирек ăçта та
кăвакарчĕ,
сунтал çинче
çава туптанипе
вăрман та, ту та
хирĕç сасă пачĕ.

Хăй выçă чух та
аптраман чăваш
эхлетрĕ,
куçĕнчен вăл вут кăларчĕ,
вара
вăшик-вăшик! те вăш! та ваш!
çулса паккус çумне
паккус хăварчĕ.

Ман вӑй ҫулмалӑх
ҫукчӗ шӑнӑрта.
Пуҫ каҫӑртсан та
эп ун чух ачаччӗ.
Шыва яраттӑм
пӑралук вӑлта.
Хӑш чух кутан,
хӑш чух кӗркке хыпатчӗ.

Эп хытӑ кӑшкӑрсан,
ман сӑмаха
ҫыран та, вар та
виҫӗ хут калатчӗ.
Мана пур япалан
илтме хӑлха,
туйса тӑма
чун пуррӑн туйӑнатчӗ.

Мана хӗрхеннӗ пекчӗ,
ҫавӑнпа
чулпа та эпӗ
тус пек калаҫаттӑм,
вӑл ӑслӑ пек,
пуплеттӗм куккукпа,
хам ӗмӗр тӑршшӗне
унран тӗпчеттӗм.

— Миҫе ҫул ҫитӗ
сарӑ Сенттие?
Нумай-и ҫул
хура кӑтра Сетнерӗн? —
Пӗр харӑс марччӗ,
уйрӑмӑн, чее
ыйтаттӑм эпӗ
куккукран пӗрерӗн.

Уяр пулсан та,
улăх нӳрĕпе
сывлатчĕ çĕр,
çĕрле тĕтре тухатчĕ.
Апла, эппин,
типмен хăй пырĕпе
Силпи куккукĕ
вăрăм авăтатчĕ.

Кирек хăçан та вăл,
унран ыйтсан,
сунатчĕ ăрăскал та
вăрăм ĕмĕр.
Яла пĕр эрнерен
хаваслă таврăнсан
ылхантăм эп:
— Пуçне, аçа, çап, çĕмĕр!

Лаша çинчен ансан,
сăхманăма
çерем çине пăрахрăм та
хăвартăм,
йĕкреш ачасене
кĕрсе курма
тусанлă пит-куçа çуми
уттартăм.

Пӳрте эп кĕтĕм.
Тăлăх та тискер.
Килкартинче те
хыпăнса çӳрерĕм:
— Эй-эй!
Авук, Сентти!
Авук, Сетнер! —
темле те кăшкăртăм,
сас-чӳ илтмерĕм.

Мана никам та
хирӗҫ чӗнменрен
ман шиклӗх ҫукчӗ,
шухӑш йывӑр марччӗ,
тухса кайма тӑраттӑм.
Нӳхрепрен
сасартӑках
Сентти пуҫне кӑларчӗ.

Кӑлкан хуххи пек
сарӑ ҫӳҫӗ ун
тӗл-тӗл тусанлӑ,
пылчӑклӑ, хураччӗ,
ун пичӗ те,
унта пӗр пӗрчӗ юн
тӑрса юлман пек,
путӑк та ырханччӗ.

Мана куҫран
чӑрр пӑхрӗ те ача,
кӳтсе хурланчӗ вӑл,
анчах йӗрмерӗ:
— Хӑрарӑм,
кӗтрӗм эп сана анчах,
кунта нумайранпа
пытантӑм,— терӗ.

— Сетнер ӑҫта? — тесен:
— Вӑл ӗнтӗ ҫук.—
Сентти именчӗ,
хӑлхаран пӗлтерчӗ:
— Тутью парасшӑн пек
Хура Танюк
пире хӑй чӗнчӗ,
хӑй пӳртне кӗрттерчӗ.

Хăй кулнă пек пулсан та,
куçĕнчен
пăхатчĕ ман çине
сар шăллă йытă.
Вăл алăк çекĕлне
çаклатиччен
вăй çук чухне те
тартăм çил пек хытă.

Кив тĕпсакай
хупахĕ айĕнче
эп хам выртсан та,
чун выртасшăн марччĕ.
Мана Сетнер
йĕрни те илтĕнчĕ,
мана чĕнни те
чĕрене кастарчĕ.

Унта çĕр каçрăм эпĕ.
Ирхине
Танюк
хăй пӳрчĕ умĕнче тăратчĕ,
ялйыш вăраниччен
хăй çĕççине
çăватчĕ,
çĕтĕк-çатăкпа шăлатчĕ.

Ку хыпара,
пиччеçĕм, эсĕ ман,
сăмах ан уç
ялта çынна пĕрне те.
Хура Танюк
хама та пусасран
хăранипе
йĕретĕп тĕлĕкре те.

— Шарламăп,—
терĕм эпĕ,— ан хăра,—
хам Сенттие тĕк пек
ансат çĕклерĕм.
Манас тесен те,
манăн шухăшра,
унта хăй кĕнĕ пек,
Танюк çӳрерĕ.

Ялта сăмах
нумайччĕ ун çинчен.
Екким пекех,
Танюк—Çӳçмет таврашĕ.
Арлан пекех
усал хăй йăхĕнче
пуйма пĕлмен те
юрлă пулнă ашшĕ.

Ку çамрăк чух
вăрра вĕреннипе
мул пухнă,
капăр çурт та хăвăрт лартнă,
хурах эшкерĕ
пысăк пулнипе
тăр-кăнтăрла та
халăха хăратнă.

Çапах та шăллă халăх
сĕм-хура çĕрле
ăна тытса
хуппа çыхса вырттарнă,
ун шăммине
вăл ватнипе пĕрле
хаяр ăсне те
пуçĕнчен кăларнă.

Ку катăк ăслă çын
килте хăйне
кăтартнă
катăк пуртă пек хăрушă.
Мĕнпур килйышĕ
тарнă инçене,
юлман пĕр йытă та,
çурт юлнă пушă.

Танюк
кипек тултарнă пек пуçа
усса антарнă та
ĕçке те путнă,
йăлтах çĕрне те
сутнă лавккаçа,
кайран тарçа кĕрсе
хăйне те сутнă.

Танюк
Якур лавккаçă патĕнче
хăй ватă чух
хуралçăра тăратчĕ,
хăй ĕлĕк
лартнă лапчăк мунчинче
мунча ийий пекех
пĕччен пурнатчĕ.

Мĕн илĕ вăл
лавккаçă çуртĕнчен?
Унта —
хăмач ялавлă ял Совечĕ.
Вăл йытăсем
тытса пусни çинчен,
вăл çын марри çинчен
хыпар çӳретчĕ.

Вăл ăслă чух та
кăнтнă çынсене,
хăй сӳтĕлсен те вăл
чунне уртарнă.
Хăйсем килмен
Хура Танюк патне,
йĕкрешсене
хăйсен выççи кайтарнă.

Йăпатрăм Сенттие:
— Эс ан хăра!
Танюк ухмах та ватă.
Эпĕ вăйлă! — терĕм,
ăна ĕç хыççăн
хутнă мунчара
хам çурăм,
çапрăм милĕкпе чиперрĕн.

Кивви пулсан та
тĕрĕллĕ кĕпе,
хăмач пир йĕм те
тăхăнтартăм,
хама
элчел телейĕ килнĕ пек,
лăшт кайрĕ чунăм,
савăнса лăплантăм.

Пыра-киле
Сентти те хӳтлĕхре
пулмарĕ
ĕлĕкхи пекех именчĕк,
йĕмерĕ, —
аташмарĕ тĕлĕкре,
кăштах пулин те
йăл кулма вĕренчĕ.

Якатрăм ун валли
патак лаша.
Сăрланă пуçĕ
каçрăлса тăратчĕ.
Кĕнекери
Сентти пек ахрашса
ман пĕчĕк тусăм
урамра чупатчĕ.

Хăй йăтнă
хуп-хура тусанĕнче
вăл сикнĕ чух
тĕнче хускалнă тейĕн.
Лерен,
пасар урамĕ енĕнчен
юланутпа
килет Çерçи Ваçлейĕ.

Вăл чуптармасть.
Пырать вăл урампа.
Тухса курманччĕ
ку чухне яла вăл.
Чĕн чĕлпĕр тытнă
сылтăм алăпа,
сулахайра
вĕçет хăмач ялавĕ.

Вăл чарăнса
пĕр авăк тăп тăрать,
тăрать те
хытă кăшкăрать хăй:
— Эй, ырă халăх,
хамăр суд пырать.
Пуянсене
чарма тапать пирте вăй.

Пурте!
Пурте!
Ватти те çамрăкки
суда,
суда,
суда
халех тăрса уттарăр!
Совет саккунĕпе
совет йĕрки
çук çынсене
хӳтленине ăнланăр!

Йыхрав илтме
кирлех чанках хăлха,
чупма — ура.
Эпир çакна пĕлетпĕр.
Сентти те, эп те
хăпнă халăха
куратпăр,
ыткăнатпăр тĕпĕр-тепĕр.

Кунта пулатчĕ
эп астăвасса
темле хăватлă
акрамат пасар та,
анчах нихçан та
халăх пухăнса
килменччĕ
кун пек хăвăрт та сасартăк!

Малтан пĕлсе тăрсах
кантур умне
пĕренесем пухса
купа хăпартнă,
хăма урай пек
сарнă ун çине,

сĕтел те пур,
нумай пукан та лартнă.

Эп палламан
таçти этемсемпе
унта
ял çыннисем те курăнмаççĕ.
Купа çине
милици ертнипе
Еккимпеле Танюк
тухса тăраççĕ.

Екким ларасшăн мар
пукан çине:
— Мана
çынçиен çумне-и? — терĕ,
вăл вăкăр пек пăхса
хăй кĕпине
чăр-чар çурса пăрахрĕ,
ĕсĕклерĕ.

— Пуç ус та
хăвăн айăпна ан тун!
Çынсен вăйне çинишĕн
халь саккун
каçармĕ! —
кăшкăрчĕ Çерçи Ваçлейĕ.

Кĕрлерĕ пĕтĕм халăх
çиллипе,
пĕр сасă
теприне пӳлсе хупларĕ:
— Хура чунна
çăваймăн куççульпе!
— Кам Евьене вĕлерчĕ?
— Эсĕ мар-и?

Кĕрлев йĕри-тавра,
мĕнпур енче
пурин те пĕвĕ çӳллĕ,
пуçĕ каçăр.
Хама хĕстернĕ
халăх хушшинче
тăратăп эпĕ
куççăр та хăлхасăр.

Хăпартăм эпĕ
йывăç тăррине,
суд умĕнчи
сĕтел çине тинкеррĕн
пăхатăп та
куратăп çын пуçне,
урисене...
Вĕсем пурте Сетнерĕн.

Пуç çаврăнчĕ.
Тапать чĕре.
Мана тавралăх
курăнчĕ пуçхĕрлĕ.
Ан куртăр куç!
Ачасене — пире
кăштах,
пĕр пĕрчĕ çеç
хаваслăх кирлĕ.

8

Анне хĕлле
ятлатчĕ шур юра,
хăна пек
хĕвеле кĕтсе тăратчĕ.
Хĕвел те
хытă пăхнă вăхăтра
усал иккен,
чараксăр ун хăвачĕ.

Куллен вăл
урăм-сурăм хĕртнипе
шыв чакрĕ,
тĕпренсе тăрать çыранĕ,
тăпра та
вучахри вĕри кĕл пек
çунтарнипе
пиçет ура тупанĕ.

Шывран туртса
кăларнă пулă пек,
сывлать çерçи те.
Шăрăх, питĕ шăрăх.
Çавраçилсем
хура юписемпе
çӳретчĕç
вăр-вар варкăшса хир тăрăх.

Тăр-кăнтăрлах
таçтан каç килнĕ пек,
кăвак тӳпе те,
ял та хуралатчĕ,
ӳпке тусан çăтса
сывланипе
кайран та халăх
пылчăклă суратчĕ.

Хĕвел пӳрленнĕ
пăсăк куçлă пек
сĕм-тĕттĕм йӳçĕ
сывлăшра пăхатчĕ,
вара килетчĕ
халăха инкек,
сӳлетчĕ чун,
сехре хăпса тăратчĕ.

Çĕр кӳкĕрт пек типсен,
çĕрле
тĕтре тухмастчĕ,
сывлăм та ӳкместчĕ,
анне çапах
вăрçмастчĕ хĕвеле,
ăна вăл
асăнма та именетчĕ.

Хĕвел пĕрре усал,
тепре маттур.
Вăл ĕлĕкрен
чăвашшăн турă пекчĕ.
Анне калатчĕ:
— Ун енне ан сур!
Ӳтне ӳпне çăпан
кăларĕ,— тетчĕ.

Ăна çынсем
тархасшăн пуç пĕксех
кĕлтунă хыççăн
чир-чĕр пулмĕ,
çумăр ӳкĕ.
Ялйыш шăпланчĕ,
çулленхи пекех
кăçал тумарĕ
ырă çумăр чӳкĕ.

Пĕлмерĕ
выçă халăх ним тума.
Кам халĕ çăнăх та
кĕрпе пуçтарĕ?
Уйчӳк вăрманĕнче
çисе ларма
кам выльăх парĕ?
Кам ăна пустарĕ?

Тухман-ха халăх
тĕшмĕш тĕнчинчен,
ăна вăл халĕ те
хытах ĕненнĕ:
çĕр типсенех
хăйсен тăван килне
пур вилнĕ çын та
килнĕ те иленнĕ.

Чунсем пӳртре
лараççĕ лăк-тулли,
хăйсем куçа
нихçан та курăнмаççĕ,
Кăçал, чи выçă çул,
хăйсем валли
çиме апат,
туртма табак ыйтаççĕ.

Пĕр намăс та пĕлми
куллен чыхма
юрать-и чунсен?
Вĕсем юлхав-и?
Кутран тапса
пурне те кăларма
ирттермелле иккен
сĕрен уявĕ.

Ялти чи ватă халăх
хушнипе
эпир, ача-пăча,
сиккелекенччĕ,
хапхасене
хăва хулăсемпе
çапса та,
çухăрса та иртекенччĕ.

Хӑй масарне
ӑсантӑр килнӗ чух!
Пур чир те тартӑр,
халӑха ан тивтӗр!
Эпир шӑлтӑрмапа
хӑратнӑ чух
шыв сирпӗтсе
иртеттӗмӗр ял витӗр.

Эпир ял хысӗнчи
ҫерем ҫинче
вучах чӗртеттӗмӗр.
Вут-ҫулӑм урлӑ
сиксе каҫсан,
илемлӗччӗ тӗнче,
иртсе каятчӗ пек
инкек те хурлӑх.

Кӗрпе те,
ҫӑмарта та ҫуккипе
ялйыш
сӗрен пӑтти тӑвас темерӗ,
ҫӳлти туррисенчен
шикленнипе,
шуйттансенчен
именнипе ҫӳрерӗ.

Ялта малтан пӑш-пӑш,
кайран ҫил пек
тухса килтен киле
хыпар ҫӳрерӗ:
— Евьен тӑван ялне
ҫилленнипе,
ун чунӗ халӗ
вупӑр пулнӑ,— терӗ.

Вăл чарнă имĕш
çумăра çума,
ăна вăл
хамăр хирсенчен тустарнă,
тата Сетнер ачишĕн
тавăрма
ачасене ертме
вĕри чир сарнă.

Вилсен те имĕш
çылăхлă ӳтне
темле çынсем
çĕрле чавса кăларнă,
ылханлă
унăн кăкăр шăммине
юман юпа çапса
каллех пытарнă.

Кăна пĕлет пулин те
пĕтĕм ял
сăмах хăй вăрă пек
хуллен çӳрерĕ.
Ман атте:
— Пĕлесчĕ сан сахал.
Чĕлхӳ шăл хушшинче
шăп вырттăр,— терĕ.

Этем шырарĕ
айăп хăйĕнче,
вăл кӳршĕ-аршинче те
айăп курчĕ,
хăй ӳкĕнсен те,
юлчĕ чĕринче,
чунне кăшларĕ
хуйхă-суйхă хурчĕ.

Мемме ыйтать
хӑй выҫӑ вӑхӑтра
мӗнпур усал-тӗсел.
Итле те тарӑх!
Юсман ҫиесшӗн
йӗрӗх ҫырмара,
шыври хӗрт-сурт
ҫиесшӗн тутлӑ турӑх.

Тӑрант-ха вӗсене!
Тавралӑхра
шуйттанлӑ,
пӗчӗк турӑллӑ пур вырӑн.
Пыра-киле
ҫӗнтерчӗ пур турра
усал турри.
Вӑл — выҫӑ хырӑм.

Ҫапмарӗ вӑл.
Ҫӳретрӗ вӑл хӑйне
килтен киле.
Ҫапла ку вӑйлӑ турӑ
ял масарне
ун анлӑ кӑкӑрне
вӗр-ҫӗнӗ хӗрессем
лартса тав турӗ.

Ыраш шӑрки
халех тухасшӑн мар.
Пулас тырра кӗтме
кунсем инҫеччӗ.
Пурин чунне
шантаракан хыпар
ҫӳретрӗ ял,
ӑна вӑл хӑй ӗненчӗ.

**Хыпар:**
**— Ку выҫлăха ҫĕнтерекен**
**этем пур,— терĕ,—**
**халăха хĕрхеннĕн**
**ялтан яла кĕрсе**
ҫӳрет иккен
хăй Ленин,
аслă Ленин,
пирĕн Ленин.

Портречĕ
пирĕн ял Советĕнче
хăй кепкине
алла тытса тăратчĕ.
Хăй ҫӳллĕ марччĕ,
халăх хушшинче
ытти этемсемпе
пĕртан вăтамччĕ.

Анчах ман урăх шухăш
пурччĕ ун ҫинчен.
Вăл пĕлĕт ҫӳллĕш
курăнса килетчĕ,
ҫич-сакăр
пысăк вăкăр тирĕнчен
ҫĕленĕ атăпа
утса ҫӳретчĕ.

Вăл пирĕн халăх
кĕвенте текен
ялтравлă
виҫĕ ҫăлтăра илетчĕ,
пире сехмет те
выҫлăх сĕнекен
буржуйсене
кĕвентепе хĕнетчĕ.

Вăл чăн мĕнли çинчен
ял халăхне
шкулта
Варвара Çитрăвнă калатчĕ,
вăл калаçма
хăш чух анне патне
хăйматлăх тусĕ пек
килселаратчĕ.

Вăл ĕлĕк
Чĕмпĕрти чăваш шкулне
пĕтернĕ,
илнĕ вĕрентекен ятне те,
унта тĕл пулнă
Ленин ашшĕне,
ăна хăйне те,
унăн пиччĕшне те.

Пĕрре
Варвара Çитрăвнă килсен,
Сентти ыйтса пĕлесшĕн
вĕтеленчĕ.
— Ача чухне,
кайран та çитĕнсен
Ильич
чăваш шкулне килсе çӳретчĕ.

Сентти мана
хай çавăтсах лартать
каска çине
канаш тăвасшăн:
— Мана, пичче,
пĕр çул туртса тăрать.
Пĕлетни, эпĕ аякка каясшăн.

Хӑй аслӑ Ленин
хамӑрӑн яла
килет-и? — терӗм,
кӗтрӗм-кӗтрӗм эпӗ.
Ана курасчӗ
ӑшӑ чух ҫулла.
Пичче, мӗнле пек?
Ун патне ҫитеп-и?

— Тӑхта-ха, шӑллӑм,
ӳрӑсла пӗлместӗн-ҫке.
Мускав
хӑй чӗлхипе мӗн тейӗ?
— Пӗлменнипе
тухать-и ман тинке!
Пулмасть-и
йывӑр ҫул ҫинче телейӗм?

Мана,
мӑнтарӑн тӑлӑх-турата,
ӑнланӗ Ленин.
Вӑл мана хӗрхенӗ.
Вӑл ӗлӗк
Чӗмпӗрти шкулта
чӑваш ачисемпе
пӗрле ҫӳренӗ.

— Тӑван ялсем
Варварӑ Ҫитрӑвнӑ
сана пӗлет,
сана мухтать вӑл,— тейӗп,
сан килйышна
тата хӑвна
чӑвашсенчен
салам каларӗ,— тейӗп.

— Варвара Çитрăвнă
хăй ятĕнчен
çыру çырса ямасть-ши? —
терĕм эпĕ.
— Аюк!
Хыпар ан кайтăр ман çинчен,
ача-пăча
ан чуптăр тĕпĕр-тепĕр.

Варвара Çитрăвнă,
хĕрхеннĕскер,
хăй кайнă чух
пире хавас сиктерчĕ,
парса хăварчĕ
çăмарта пĕрер,
тата пĕрер
çемçе куймак-икерчĕ.

Ăна эп хам
кучченеçе парсан,
Сентти татах та
хытă хĕпĕртерĕ:
— Ку вăрăм çул çинче
тăрантайсан,
мана Мускав
хăех тăрантĕ,— терĕ.

Вăл сырчĕ çăпата,
хăйпе пĕрле
сăхман илсе
хул хушшине хĕстерчĕ,
ялтан ик çухрăм
станцирен çĕрле
ахаль таварнăй
поездпа вĕçтерчĕ.

9

Тăвата шурă
сурăх путекки
эп Киремет-Ту
тăрринче пăхатăп.
Хăйсем çӳреççĕ те,
вĕсем пирки
ман шухăш çук.
Пĕр чул çинче ларатăп.

Пĕр шухăш
халĕ çавăрать пуçа.
Килет
Утей вăрманĕ урлă çумăр.
Лерен
çеçенхирсем çинчен куçса
шăваççĕ пĕлĕтсем
хура та хăмăр.

Чăнах та вăл пулсан,
ман туррăма
чĕркуçленсе каласчĕ:
— Эсĕ аслă!
Унтан ыйтасчĕ
çумăр çутарма
ыйткалакан пек
тилмĕрсе тархаслăн.

Пĕлместĕп кĕлтума.
Пуççапрĕ ял.
Анчах çӳлти турри
хăнк та тумарĕ.
Пире тăрантарма
хирте кăçал
чылайранпа
йĕпе-сапа пулмарĕ.

Эп шурă чул ҫинчен
пĕр шухăшпа
сиксе тăратăп,
ҫумăра чĕнетĕп:
— Пиншер пичкеллĕ
сиплĕ шывупа
кил эсĕ!
Эп сана кунта кĕтетĕп.

Хама ҫуратнă
халăх ячĕпе
калатăп йăлăнса:
— Эй, ҫумăр, чашкăрт!
Унччен юнтарнă
ҫумăр иртнĕ пек,
ан сирĕл пăрăнса,
ан ирт-ха хăвăрт!

Эпир хăрамăпăр.
Вăй-хал хушса
кунта кил эсĕ,
аслати кĕрлӳҫĕн
ҫапса ҫунтар
чир тулнă сывлăша,
ăна ĕнтсе чуптар
ун витĕр ҫиҫĕм!

Ачасене хĕрхен.
Хĕн вăхăтра
эпир ҫуралнине
пĕл эсĕ, ҫумăр!
Пуласчĕ пирĕн
тутă пурнăҫра
хитре ӳт-пӳллĕ,
йĕтĕр пек чăп-чăмăр.

Чылай ман тантăш
выçлăх хирнипе,
чирпе те вилнине
ан ман-ха эсĕ,
Куратăн-и,
масарăн, вăрçă иртнĕ пек,
нумай тин лартнă
çĕнĕ шур хĕресĕ.

Шăваççĕ пĕлĕтсем
эп кĕтнĕ пек,
вĕсем ĕне пек
каçăр мăйракаллă,
шывпа ытла тулса
кӳпченипе
тăраççĕ чĕччисем
пурин те паллă.

Хăй çумăр кĕрлесе,
хăй хăватне
вăл йăлтăр
çиçĕм çиçтерсе хушсассăн,
çилсем пур пĕлĕтĕн
чĕччисене
сăваççĕ чар-чарлаттарса
хавассăн.

Пĕрремĕш аслати
кĕрлесенех
тăват путек те
тăрăс-тăрăс тарчĕ.
Мана ту тăрринче
пĕр пĕчченех
çанталăк хăй
тытса чарса хăварчĕ.

Сиксе çӳретĕп эп.
Çу, çумăр, çу!
Шывна сыпсан,
çĕкленĕ çĕр хăвачĕ.
Вара ĕне пире
хыптарĕ çу,
уй-хир тыттарĕ
çавракa кулачă.

Ку çумăр килчĕ
эпĕ чĕннипе,
вăл питĕ ырă
вăрçă пек çӳрерĕ,
етре пекех
шултра тумламсемпе
кӳпкерĕ выçлăха,
чире хĕнерĕ.

Кĕпе те, хам та
лачăкам йĕпе,
ӳт-тир те кăвакарнă,
сывлăш сивĕ
пулсан та,
хамăр халăхăн телейĕ пек,
чуна вĕрилентерчĕ
çумăр шывĕ.

Шăнса тăратăп эп
çара уран.
Сехре хăпмасть,
аçа шарт-шарт çапсан та.
Мана вăл тивмĕ халь
çара пуçран.
Эп хам тивмен,
çынна çапман нихçан та.

Ытла вěрет пулсан
хаяр çилли,
ара, Екким килне
çапса çунтартăр.
Мана вăй патăр вăл
вěçев валли,
сăваплă асамат
кěперě картăр!

Кěпер пирки çӳретчě
пěр юмах,
ăна атте те
каласа паратчě.
Ун айěнчен
чупса тухсассăнах
пулса тăрать
ватти те çамрăк каччă.

Ун чух мěн кирлě
вирлě шухăша,
çав пулě
хăвăрт та чиперрěн.
Мана шап-шурă
урхамах лаша
тупса паринччě
асамат кěперě.

Лӳшкěртрě çумăр
таврари çěре,
ăна вăл
хытă какăртсах шăварчě,
хăй кайнă чух
эп кěтнě кěпере
Силпи улăхěнче
чăнах та карчě.

Эп каçăртса
тытатăп кăкăра.
Эп мар,
хăй тĕллĕн манăн ик ура та
çулпа та çулсăр чупнă чух
умра
сенкер кĕпер,
кĕпер анчах куратăп.

Ман хыççăн пылчăк
сирпĕнсе юлать,
пĕрре çăри,
тепре çемçе шĕвви те.
Мана çил хирĕç
перĕнсе çапать.
Ăна хирсе
пыратăп эп ун витĕр.

Вăрман тĕл пулчĕ.
Урлăшĕ çинçе.
Çул пачĕ вăл,
мана чарас темерĕ.
Мана кĕтсе пек
тӳпере çиçсе
кăваррăн çунчĕ
асамат кĕперĕ.

Ӳкетĕп те
тăратăп тепĕр хут,
чупатăп,
куçăм хуралать пулин те.
Мана кĕтсе
ту айккинче шур ут
çĕре кукалесе
тăрать-тĕр ĕнтĕ.



Тăван Силпи
кĕперĕ айĕнчен
те тухрăм,
те мана кĕпер хĕрхенчĕ.
Чăнах лаша
ту сакăлти çинче
мана кĕтсе,
мăйне тăсса кĕçенчĕ.

Ку чăнлăх-и?
Юмах тĕнчи теме
сăлтавăм çук.
Паллана çĕр выртатчĕ.
Лаша йĕнерлĕччĕ,
анчах вĕçме
вăл урхамах пекех
çунатлă марччĕ.

Пĕлмерĕ вăл
этем пек калаçма,
хăй сăмсинчен
хĕлхем те пĕрхĕтмерĕ.
— Каяр-и, тусăм,
Ленина курма? —
тесен те, вăл
мана сăмах чĕнмерĕ.

Ана сиксе утлантăм,
чĕлпĕре
карт! туртрăм та,
лаша хавас кĕçенчĕ,
чĕвен тăрса
вăл тулхăрчĕ пĕрре,
тепре çĕре тапса
çӳле çĕкленчĕ.

Вĕçсен те,
çурăк пĕлĕт хушшинчен
эп куртăм
хамăр ансăр анана та,
капансене те
айлăм хĕрринче,
ту тăрринчи
юманлăх вăрмана та.

Юратнă Силпие
çӳлтен курса
ытарайми
çĕкленчĕ чун хăвачĕ.
Такам пăрахнă хĕç пек
çуталса
ун шывĕ
улăх хушшинче выртатчĕ.

Ман пуç шалт тĕлĕнсе
аптранипе
персе ӳкес пек
эпĕ пытăм.
Шур пĕлĕт витĕр,
унăн çиййĕпе,
ун айĕпе те
вĕçрĕ манăн утăм.

Куçа пĕрре уçса
пĕр хупиччен
нумай хула та, ял та
иртрĕ вĕл-вĕл.
Хаçат вуланă чух
Митрук пичче
кăтартнă пек иккен
хӳмеллĕ Кремль.

Кунти çуртсен
тăррисене курма
пуçна ан каçăрт,
çĕлĕкне ÿкерĕн,—
теме лартман
эп çĕлĕк пуçăма,
кунта хăна пулма
килмен типтеррĕн.

Хула та
ешĕл курăклă иккен,
хÿме хĕррин те
пур иккен çеремĕ.
Лаша унта çисе
тăраниччен
тĕл пулăп Ленина,
нумай çÿремĕп.

Кунта та çумăр
иртнĕ хальтерех,
хăварнă путăкра
таса кÿленчĕк.
Ман урасем
тасалчĕç хăйсемех,
йĕм пĕççисем те
иртнĕ чух чÿхенчĕç.

Пĕр çÿллĕ çуртăн
тăрринче ялав
куратăп эп,
унта куçа тĕлленĕн
хам утнă чух
сасартăк та васкав
ман еннелле
киле парать
хăй Ленин.

Вăл çӳллĕ мар,
ман аттепе пĕр тан,
ӳкерчĕкри пекех
кĕске сухаллă.
— Аван-и! — терĕм эпĕ
аякран,
чупсах хăюллă пытăм,
патăм алă.

— Аван-и, ыльăм,—
терĕ вăл мана,
мана хул хушшинчен
тытса уттарчĕ,
вĕрилентерчĕ
утнă чух юна,
леш шалкăм çумăр шăнтнине
мантарчĕ.

Нумай пусмаллă
пысăк кермене
эпир кĕрес чухне
салтак тăратчĕ.
Вăл сылтăм аллине
тăнлав çумне
тытса тăрса
пире ик хут чыс пачĕ.

Пĕр чысĕ — Ленина.
Тепри — мана.
Салтак:
— Сана, тăванăм,
сивĕ мар-и? —
тесе пек пăхрĕ
манăн урана,
каларĕ куçĕ:
— Ленин атă парĕ.

Мана çара уран
утма хитре
шалта палас.
Маччи тӳпе пек çӳллĕ.
Пĕр алăкран
пырса кĕрсен, пире
тĕл пулчĕ
уй пек аслă çутă пӳлĕм.

Йĕри-тавра
мĕнпур енче
мĕнпур сĕтел те, шкап та
кĕнекеллĕ.
Ларма хушсан та,
халь ура çинче
ман каласа
парас килет йĕркеллĕн.

— Ялта пĕлет
Варварă Çитрăвнă
сан аçуна,
хăвна та, пиччӳне те.
— Чим,— терĕ Ленин,—
ăшăт-ха хăвна,
кур Мускава,
сыпса кур ун чейне те.

Чăнах та,
çамрăк та маттур салтак
вĕри сăмаварпа
пырса кĕретчĕ.
Йӳле ярса,
пиçиххине салтсах
ман тутлă сахăрпа
ĕçес килетчĕ.

Ман ĕнтĕ Ленинпа
юнашарах
ларма та, калаçма та
чун вĕретчĕ...
Выртаттăм эпĕ
хамăр улăхрах,
ман типнĕ ăшчике
чикен чикетчĕ.

Вĕри хĕвел
шур пĕлĕте уçса
пăхса тăрсан та,
çĕр айра сип-сивĕ.
Манпа та, чулсемпе те
шăппăн калаçса
юхса выртатчĕ
çывăхра çăл шывĕ.

10

Ман çумăр хыççăн
улăхра чухне
тăма ӳтре вăй çукчĕ.
Вилнĕ тейĕн.
Мана тĕл пулчĕ,
урапи çине
вырттарчĕ вată тус
Çерçи Васлейĕ.

Вăл салтакра çӳренĕ,
çавăнпа
ал тымарне
тытса пăхса тĕпчерĕ:
— Чирленĕ эсĕ
йывăр шухăшпа,
ху халĕ
пĕчĕкçĕ пулин те,— терĕ.

Эс хăвăн
Кĕçтенттин пиччŭ пекех
пулма халех ан тăрăш,
ванăн.
Ку вилĕм куçлă выçлăх
тек-текех
килсе сайратмĕ
халăха, тăванăм.

Вăл сар чечеклĕ
çимĕк курăкне
çул хĕрринчен
татса мана тыттарчĕ,
мана киле çитерчĕ,
сак çине:
— Чир иртĕ тепĕр ир,—
тесе вырттарчĕ.

Иртсе каймарĕ чир.
Вăй çуккипе
ман ŭтĕм
мунчари пекех тарлатчĕ,
пур япала та, çын та
пĕтĕмпе
мана сап-саррăн
курăнса тăратчĕ.

Атте каланă пек,
пĕрчĕленсе
ыраш сĕткенленет иккен
чăп-чăмăр.
Мана хавасланса
тŭсме чĕнсе
час-час çуса
иртетчĕ сиплĕ çумăр.

Анне каланӑ пек,
ҫав ҫумӑртан
пите сӑнар,
алла ман вӑй кӗмерӗ.
Мана курнатчӗ
тӑвӑр кантӑкран
кичем пек саррӑн
асамат кӗперӗ.

Епле пулин те
хӑвӑрт сывалма,
тухса чупма
эп шухӑшлаттӑм,
леш ҫимӗк курӑкне
хам сывлама
минтерӗм айӗнчен
илсе выртаттӑм.

Пичче мана
хӑй урнӑ пек пӗрре:
— Сиксе тӑр! — терӗ.
— Ленин пӗлнӗ! — терӗ.
Мӗн пӗлнӗ-ши?
Куҫра хура тӗтре.
Ура ҫине тӑрсан,
ура чӗтрерӗ.

— Ҫи, шӑллӑм! —
терӗ тепӗр хут пичче,
мана вӑл
йывӑҫ кашӑк та тыттарчӗ.
Какай яшкин
чи тутлӑ шӑршинчен
пуҫ ҫаврӑнчӗ
тата пыра тем ларчӗ.

Умри сётел çинче
сап-сарă чей,
шап-шурă çăкăр та
чăлт-шурă сахăр.
Нихçан та эп курман
кун пек телей,
çимен кун пек тутли
кайран та ахăр.

Чупса
çӳрерĕ
юнăм витĕрех
эмел пекех
чĕре сури апачĕ,
мана ура çине
тăма тĕрек,
ял урамне тухма
хĕрӳ вăй пачĕ.

Вĕçме сикетчĕ
кайăк евĕр чун,
анчах хевте
сикмелĕх сывă марччĕ.
Мана пиччеçĕм
ертрĕ тепĕр кун,
хулран
тытса пырсах хăйпе уттарчĕ.

Ял варринчи
пĕр анлă лаптăка
акман нихçан та,
çеремре хăварнă.
Кунта иккен
саваласа пукан,
сётел йĕркипеле
лартса тултарнă.

Кунта иккен
тӑрантакан тӗнче.
Мӗнпур ача-пӑча
паян кунтаччӗ.
Вӗсен пур тӗслӗ
пуҫӗсем ҫинче
хӗвел те
тӗлӗннӗ пекех тӑратчӗ.

Куҫсем —
хури, ҫырри те сенкерри,
мӗнпур тӗсли —
Ильич ҫине тинкеррӗн
пӑхса илсе анчах,
кӗрекери
пур кашӑк
ҫӗкленетчӗ пӗр эшкеррӗн.

Пурне те
выҫлӑхсӑр хитре тӗнче
тата ҫап-ҫамрӑк
ӗмӗрӗн хӑвачӗ
сунса,
Ильич портречӗ тӑрринче
хӑмач ялав
вӗл-вӗлкӗшсе тӑратчӗ.

Кунти ачасене
мӗнпур касран
чӗнсе пуҫтарнӑ
хамӑр ял Совечӗ.
Юпа ҫине
вӑл ҫакнӑ хӑмаран
пӑхатчӗ
кепкӑллӑ Ильич портречӗ.

Мана та, пиччене те
кашӑкпа
ларма хушса
Ильич йӑл-йӑл кулатчӗ.
Чӗкеç инкемӗрпе
Альтук аппа
çитерчӗç рис пӑтти те
шур кулачӑ.

Ильич
хӑй лартнӑ самана сакки
пире сехметлӗ
вилӗмрен хӑтарчӗ,
мана ӳтре
вӑй ӗрӗхнӗ пирки
ыраш вырма
каçалӑка кӑларчӗ.

Пичче те, эп те
хамӑр Силпире
ака тусан,
аттемӗр акнӑ тулӑ
çӗре çемçетнӗшӗн
тинех пире
тав турӗ,
ӳсрӗ пултаруллӑ.

Эпир ӑна вырсан,
ӑна йӑлтах
çапсан, купаласан—
пире тиркемӗр! —
хӑма кӗреçепе
ывта-ывта
арпа вӗçтерчӗ
çил çинче аттемӗр.

Вăл тулă сăвăрса
йĕтем çинче
пуçтарчĕ ылтăн кăшăл,
чаплă пурлăх.
Вăл авăртрĕ
Силпи арманĕнче
хăпартупа хуплулăх
шурă çăнăх.

Патшалăха
пĕр пысăк лав тулли
кайса сутсан,
укçаллă пулчĕ енчĕк.
Çапах кăçал
аттемĕр ман валли
пиншак та, атă та
илме хĕрхенчĕ.

Ăшра ӳпкелесси те
пулчĕ ман.
Кĕтни тухмарĕ.
Чунăмçăм хурланчĕ.
Атте юлас
темерĕ халăхран,
çынсем пек вăл та
акапуç туянчĕ.

Атте мана:
— Кăçал çĕртме тума
çулу сан çитнĕ,
тухнă вăхăт карчĕ,—
тесе каларĕ,
манăн аллăма
вĕр-çĕнĕ
акапуç уççи тыттарчĕ.

Эп тепӗр кун
кӑвак ҫутпа тӑрса
ҫӳрен ута
сӑхман хурса утлантӑм,
Хӑла ута та
чӗлпӗртен тытса
хура пусса
пиччесӗрех ӑсантӑм.

Ака чипер пырсан та,
тем ҫинчен,
пӗлмесӗр хам та,
эпӗ шухӑшлаттӑм,
вара
акапуҫҫи таратӗнчен
хайхи уҫҫа
салтса илсе пӑхаттӑм.

Тӑпраллӑччӗ.
Ана хырса тӑкса
унта ҫыру пекки
вулас килетчӗ.
Вутпа хӗртсе
шӑратнӑ ят — Аксай —
тени мана
питех тӗлӗнтеретчӗ.

Пур винт та,
пӗчӗкки те тӗнчере
хӑйне кура иккен
хисеплӗ ятлӑ.
Атте-аннемӗр
мӗншӗн-ха пире
пӑсма та юракан
ятпа ҫуратнӑ?

Ман аташсем нумай.
Пăхма маттур.
Анчах ята пăсаççĕ
леш те, ку та.
Хура Якку,
Чăлах Якку та пур,
ялта пур пирĕн
Чăх Вăрри Якку та.

Ман ятăма та
пĕр-пĕр шăлйĕрен
пăсса витлемĕ-ши?
Хăраттăм эпĕ.
Ятра та пултăр
— Эсĕ çын! — текен,
питрен сурман
ман халăхăн хисепĕ.

Начар теместĕп
хамăн сăнăма,
чуччу пуç урлă
çаврăнса сикеттĕм,
хевте вăйне
пурне те кăтартма
чи çӳллĕ, чăнкă
кайнă чух: — Ух! — теттĕм.

Пĕр ватă ырă çармăс
ĕлĕкрех
ялта çуллен
кĕтӳçĕре çӳретчĕ,
мана курсан,
тăван ачи пекех,
пуçран шăлатчĕ вăл,
мана: — Сай! — тетчĕ.

Хитре тени пулать
вăл çармăсла.
Апла, эппин,
эп ух! та сай! хăватлă.
Пăртта тавраш̆ĕ
япăх пулмасла,
хăйне мухтамалла
мана çуратнă.

Чăнах та
икĕ сăмаха пухса
хама янравлă ятлă
эпĕ турăм,
хура ана
тăпри çине Ухсай
çырса кăтартрăм
хĕвеле маттуррăн.

«Аксай» паллиллĕ
тимĕр уçăпа
чĕрсе ыраш аксан,
йĕпе пуçланчĕ,
вара ман ят
турпас пек пучахпа
ăнса ӳссе
çул хĕрринче хăпарчĕ.

Ăна тирпейлĕн
выртăм çурлапа,
ун улăмне
çӳрен ута çитертĕм,
пур кайăка çиме
хавaслăхпа
парка тĕшшисене
çилпе вĕçтертĕм.

Сăмах çеç мар,
йĕри-тавра Ухсай
матери пулнине
ман чун ĕненчĕ.
Ята калана пек,
пуçне ухса
лаша
Силпи шывне ĕçсе кĕçенчĕ.

Ман ятлă пĕрчĕсен
сĕткенĕнчен
пур кайăк та
шавларĕ темĕн тĕрлĕ,
вĕçсе çӳрерĕ
пуçăм тăрринче
мана паллană пек
тĕвик-текерлĕк.

Хура курак
хĕвеллĕ кăнтăра
ман ятăма
хыпса илсе кайсассăн,
унта калас пек туйăнчĕ,
вара
чараксăр манăн килчĕ
мухтанассăм.

Унччен калаçнă
эпĕ вăрманпа,
юханшывпа та
тусемпе чиперрĕн.
Ку вăхăтра
мăнланнă сассăмпа
çӳлти çап-çутă хĕвеле:
— Эй! — терĕм.

Вĕри пулсан,
вĕреннĕ эп тӳсме.
Мана йăтса илме
тăсса пар алă.
Шап-шурă пĕлĕт
тăрăх çӳреме,
куратăн-и,
ман урасем тăпраллă.

Хура çĕре,
хĕвелĕм, ан тирке!
Ăна çунтартăн эсĕ
выçлăх çул та.
Çуту чипер чухне
çĕр ĕçлекен
хаваслăн тыră выртăр,
утă çултăр!

Мана эс ил
акапуçпе пĕрле.
Ăна эпĕ çӳретĕп
пĕлĕт тăрăх.
Сан патăнта-çке
ман ĕçлемелле,
хуратмалла
сан пĕлĕтне.
Ан тарăх!

Хĕвел пытанчĕ
хулăн пĕлĕтре,
мана суха тума
илес темерĕ.
Мана чӳхерĕ
çумăр Силпире,
кунтах хăварчĕ
асамат кĕперĕ.

Ака-суха таврашĕ
кăларма
таçта Аксай текен
пĕр пысăк савăт
пур,— терĕм те
каларăм эп хама:
— Ухсай ачам,
çĕр чав та савăн!

Куçса çӳрен
чĕп-чĕрĕ савăт пек
хирте çĕр алтнă чух
тăван çĕршывăн
илемлĕхне чăмса,
ăна мухтарăм эп,
савса шăратрăм
сăвă хыççăн сăвă.

Юратрăм хамăн
Силпири тăва,
ăна чăваш юррин
Олимпĕ терĕм,
куççуль тăварĕ
витнĕ хам сăвва
Силпин шур чуллă
çăлĕнче чӳхерĕм.

Мухтавлă Гетен
идилийĕнче
хаваслă Герман,
лăпкă Доротейă.
Хура мăянлă
çăкăр йӳççинче
çуралчĕ манăн та
туссен телейĕ.
1967—1968

## СССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

**Я. Г. Ухсай писателе Октябрьти Революци орденĕпе наградăласси çинчен.**

Совет литературине аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн, общество ĕçне активлă хутшăннăшăн тата çуралнăранпа утмăл çул тултарнă май Яков Гаврилович УХСАЙ писателе Октябрьти Революци орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнай Совет
Президиумĕн Председателĕ

Н. ПОДГОРНЫЙ

СССР Верховнай Совет
Президиумĕн Секретарĕ

М. ГЕОРГАДЗЕ

Мускав, Кремль. 1971 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕ.

## ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕ

**1971 çулшăн литературăпа искусство енĕпе Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен премине парасси çинчен**

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен премине парас енĕпе ĕçлекен комисси тăратнă сĕнĕве йышăнса, 1971 çулшăн Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине «Ача чухнехи çăлтăрăм» тата «Силпи çăлкуçĕ» ятлă поэма çырăмĕсемшĕн чăваш халăх поэтне Яков Гаврилович Ухсай юлташа парас.

Чăваш АССР Министрĕсен
Совечĕн Председателĕ

М. ЗАЙЦЕВ

Чăваш АССР Министрĕсен
Совечĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ

А. ГЛАДКОВ

1971 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕ

# РСФСР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

**1972 çулшăн литература, искусство тата архитектура енĕпе РСФСР Государство премийĕсене парасси çинчен.**

РСФСР Министрĕсен Совечĕн Президиумĕн комиссийĕ РСФСР Государство премийĕсене парас пирки тăратнă сĕнӳсене пăхса тухса, РСФСР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăнать.

1972 çулшăн РСФСР Государство премийĕсене çак юлташсене парас:

**Литература енĕпе — М. Горький ячĕпе хисепленекен премисене Михаил Александрович Дудина,** поэта,— «Вăхăт» ятлă сăвă кĕнекишĕн.

**Яков Гаврилович Ухсая,** поэта,— «Ача чухнехи çăлтăрăм» ятлă сăвă кĕнекишĕн.

**Алексей Кузьмич Югова,** писателе,— «Хаяр суд» дилогишĕн.

РСФСР Министрĕсен Совечĕн
Председателĕ

М. СОЛОМЕНЦЕВ

РСФСР Министрĕсен Совечĕн
Ĕçĕсен Управляющийĕн Заместителĕ

И. ФИЛАТОВ

1972 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕ

*Хаклă вулакансем!*

*Чăваш кĕнеке издательстви сирĕнтен Яков Ухсайăн «Ача чухнехи çăлтăрăм» кĕнекине кĕнĕ поэмăсем çинчен хăвăр шухăш-кăмăлăра çырса пĕлтерме ыйтать.*

*Çырусене çак адреспа ямалла:* **428000,** *г. Чебоксары, проспект Ленина, дом* **4,** *Чувашское книжное издательство, редакция художественной литературы.*

## ТУПМАЛЛИ

Кунҫул тӳпинчен. Умсăмах. . . 5
Чапаева тĕл пулни . . . . 17
Ача чухнехи ҫăлтăрăм . . . 45
Силпири асамат кĕперĕ . . 83

**Яков Гаврилович УХСАЙ**

**ЗВЕЗДА МОЕГО ДЕТСТВА**

Трилогия

На чувашском языке

Редактор *Ю. С. Семенов*
Художник *М. А. Ильин*
Художеств. редактор *А. А. Афиногенов*
Техническ. редактор *А. Ф. Никитина*
Корректор *Л. А. Иванова*

НТ 17595. Сдано в набор 12/XII-1972 г. Подписано к печати 13/VI-1973 г. Изд. № 86/73 г. Формат 70×108/32. Бумага типографская № 1. Физ. печ. л. 6,0. Усл. печ. л. 8,40. Учетно-изд. л. 8,68. Заказ № 6285. Тираж 2000 экз. Цена 90 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. Чебоксары, Володарского, 5.

3,64

Цена 90 коп.